26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
26
КĔÇНЕРНИКУН
171(6408) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 24-мĕшĕнче пирĕн ХАРЬКОВРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра наступлени туса пыракан çарсем малалла куçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Донбасра, ИЗЮМРАН кăнтăртарахри тата ВОРОШИЛОВГРАДРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районсенче, пирĕн çарсем тăшманпа ăнăçлăн çапăçнă, çĕнĕрен халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн çарсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Августăн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 77 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 106 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Пирĕн çарсем Харьков хулине йышăнса илнĕ хыççăн çаплах малалла тапăнса пынă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Пирĕн чăςсем çапăçса юханшыв урлă каçнă та каялла чакакан тăшмана пыра-пыра çапнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсем пăрахнă хĕçпăшалпа çар пурлăхĕ нумай вырса юлнă.

Харьковран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманăн пысăк вăйĕсемпе çапăçса, малалла куçнă. Кун каçиччен пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити вĕлернĕ. Тăшманăн 25 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Юлашки çапăçусенче халсăрланса юлнă тăшман кунти участоксене васкаса хăйĕн резервĕсене илсе пырать.

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чăςĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сире-сире ярса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 18 танк тата 3 бронемашина пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 21 хир туппи, хăй тĕллĕн çÿрекен 5 тупă, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Советсен тăван Украинине нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн пыракан кĕрешÿре Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем паттăрлăхпа геройлăх кăтартаççĕ. Гварди лейтенанчĕн Духовăн танк экипажĕ, тăшманпа çапăçса, нимĕçсен „тигр“ йышши икĕ танкне персе çĕмĕрнĕ. Гварди лейтенанчĕн Головинăн танк экипажĕ тăшманăн 4 танкне, вăл шутра 2 йывăр танкне, пĕтерсе тăкнă. Красноармеецсем Рязановпа Чайка юлташсем нимĕçсем тăнă вырăна пырса кĕнĕ те, гранатăсем ывăтса, 46 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пулемет расчечĕн командирĕ Попов сержант пĕр çапăçура, станковăй пулеметпа персе, нимĕçсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Усалиев боеца 9 нимĕç тапăннă та тыткăна илме хăтланнă. Усалиев юлташ автоматпа персе, хăйне тапăннă гитлеровецсене пурне те вĕлерсе тăкнă.

Совет летчикĕсем кункаçиччен пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 22 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Тăшман, контратакăсем туса, совет çарĕсем малалла куçса пынине чарса лартма хăтланнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен пур контратакисене те сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Пĕр гвардейски соединени кăна 800 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна лекнĕ нимĕçсем çапла пĕлтереççĕ: нимĕçсен 294-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи ротăсенче нумайĕшĕнче 3—6-шар салтак кăна тăрса юлнă. Ыттисене вĕлернĕ, амантнă е тыткăна илнĕ.

Совет разведчикĕсен ушканĕ, старши лейтенант Ткачев командир пулса ертсе пынипе, тăшманăн малти речĕсем витĕр сăрхăнса кĕрсе кайнă та нимĕçсен артиллери батарейин позицийĕсене атакăланă. Разведчиксем тупăсен расчечĕсене вĕлерсе пĕтернĕ те нимĕçсен батарейине тытса илнĕ.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă. Вăйлă çирĕплетнĕ пункт патне пымалли вырăнсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Совет боецĕсем çав пункта вăркăнса кĕрсе кайнă та каç пуличчен ăна нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Çав çапăçура тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити вĕлернĕ, 12 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 16 тупă пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра 15 танк хăй тĕллĕн çÿрекен 6 тупă, тĕрлĕ калибрлă 60 тупă тата 90 пулемет. Тыткăна илнисем пур. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 33 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Брянск енче пирĕн подразделенисем тăшмана халăх пурăнакан 4 пунктран хăваласа кăларнă. Нимĕçсем çав пунктсенчен пĕрне уйрăмах вăйлăн хÿтĕленĕ. Взвод командирĕ Ионесян юлташ çĕрле боецсен ушкăнĕпе пĕрле тăшман позицийĕсем патне шăппăн шуса çитнĕ те нимĕçсен окопне вăркăнса кĕрсе кайнă. Штык вĕççĕн пулса иртнĕ тытăçура пирĕн боецсем нимĕçсен 68 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 15 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ. Артиллерипе миномётсем персе тăшман артиллерийĕн 4 батарейине, миномётсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă, 20 дзотпа 11 блиндажа ишсе антарнă.

Рига заливĕпе Финн заливĕнче пирĕн карапсемпе флот авиацийĕ нимĕçсен пĕтĕмпе 8000 тонна водоизмещениллĕ 2 транспортне тата хуралта çÿрекен карапĕпе катерне шыва путарнă.

* * *

Ровно облаçĕнче кĕрешекен украинец партизанĕсен темиçе отрячĕ нимĕçсен 21 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 21 паровоз, фронта техникăпа боеприпассем тата ытти çар грузĕ турттарса пыракан 270 вагон çĕмĕрĕлнĕ е сиенленнĕ. Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа тăракан партизансен отрячĕ пĕр уйăх хушшинче 2 танк, 25 грузовой тата 2 çăмăл автомашина пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсемпе çапăçса тата засадăсенчен персе, партизансем 260 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсем Болгари столицин—София хулин площачĕсенчен пĕринче выставка тунă. Витринăсем çине фотоÿкерчĕксем нумай кăларса хунă. Çав ÿкерчĕксем çинче ĕçлекен заводсемпе шахтăсене, вăрман юхтарнине, ут кĕтĕвĕсене, риспа çĕрмамăк хирĕсене т. ыт. те кăтартнă. Укерчĕксем айне çапла çырса хунă: „Нимĕç инженерĕсемпе хозяйственникĕсем ертсе пынипе, çĕнĕ Европа хĕвелтухăç районĕсенчен хурçă, тимĕр тăпри, çĕрмамăк, тырă тата рис илсе тăрать“, тенĕ.

Çав выставкăна тăвакан гитлерла жуликсем ахальтен мар çаксене кăтартса паман: ăçта, мĕнле районсенче ĕçлеççĕ çав заводсем; предприятисемпе географи пункчĕсен ячĕсене те каламан. Жуликсем çав ятсене акă мĕн пирки пытарса хăварнă. Çав выставкăра кăтартнă ÿкерчĕксем вĕсем пурте совет предприятийĕсемпе колхозсен пурнăçĕпе ĕçне кăтартаççĕ. Вăл ÿкерчĕксене ют çĕрсене Вокс вăрçă пуçланиччнех янă. Вăл çакăнтан та лайăх курăнать. Выставкăри пĕр ÿкерчĕк çинче колхозри çĕрмамăк пуçтаракан хĕрарăмсен бригадине кăтартнă. Пухса хунă çĕрмамăк купи çумĕнче Хĕрлĕ ялав курăнса тăрать, Хĕрлĕ ялав çинче Совет Союзĕн государство гербĕ уççăнах палăрса тăрать. Çапла ĕнтĕ гитлеровецсем София хулинче тунă „выставка“ фашистсен черетлĕ жуликла меслечĕ пулса тăрать. Гитлеровецсем каллех лекрĕç, йĕрĕнчĕк суеçĕсене каллех тăрă шыв çине кăларнă.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ хăçан пуçланасси çинчен

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче хăçан пуçланмаллине палăртнă.

Кĕçĕн классенче—1-мĕш класран пуçласа 4-мĕшне çитиччен—сентябрĕн 1-мĕшĕнче, аслăрах классенче—5-мĕш класран пуçласа 10-мĕшне çитиччен—октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕренме пуçламалла. (ТАСС).

Часть командирне Седулин полковника Политотдел начальникне Бахтин подполковника

Сире фронтран янă ăшă кăмăллă çырушăн пĕтĕм чĕререн тав тăватпăр. Эпир яланах çакна шанса тăнă тата халĕ те шанса тăратпăр: пирĕн республика шефа илнĕ çар чаçĕ нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хăйĕн боевой ялавĕсене варалămĕ, унти кашни боец, кашни командирпа политработник пирĕн юратнă тăван çĕршыва юлашки сывлăшĕ тухиччен паттăррăн хÿтĕлĕ.

Сире шанса панă çар чаçĕ кăçал, çуллахи çапăçусенче, каллех мухтавлăн та хăрамасăр, хастарлăн та паттăррăн çапăçнин тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕ. Орденлă республикăн ĕççыннийĕсем хăйсен ывăл-хĕрĕсем тăван çĕршыва паттăррăн хÿтĕлекенсен малти речĕсенче çапăçнăшăн, вĕсенчен чылайĕшĕ орденсемпе медальсем илнĕшĕн тулли кăмăлпа мухтанса савăнаççĕ.

Сирĕн çапăçури ĕçĕрсем, сирĕн геройла ĕçĕрсем, хаклă юлташсем, пире тылра пархатарлăн ĕçлеме хавхалантараççĕ. Пирĕн рабочисем, колхозниксем, служащисем паттăр фронтовиксемпе танлашаççĕ. Вĕсем сирĕн пата, фронта, ытларах та ытларах çар хатĕрĕ, хĕçпăшал тата апат-çимĕç ярса тăраççĕ. Пирĕн республика Совет Союзĕнчи облаçсемпе республикăсем хушшинче малти вырăна тухрĕ. Çуракинчи уйхир ĕçĕсен итогĕсене тата общественлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республикăна Обороннăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă.

Халĕ вăрçă вăхăтĕнчи тырпула пухса кĕртес ĕç хĕрсех пырать. Мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе, пирĕн колхозниксем тырă вырас, авăн çапас тата государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас ĕçсене тимлĕн туса пыраççĕ.

Тăван Хĕрлĕ Çарăн питех те чаплă çĕнтерĕвĕсем, Орел, Белгород, Карачев, Жиздра, Харьков хулисене тата халăх пурăнакан пиншер пунктсене ирĕке кăларни, аслă Сталинăн аслă кăтартăвĕсем пирĕн чĕресене çĕнĕ вăй-хăват кĕртрĕç, пире татах та паттăрлатрĕç.

Пирĕн хаклă воинсем, сире çакна шантарса калатпăр: орденлă Чăваш республикинчи ĕççынисем тăшмана хăвăртрах çĕнтерес сехете çывхартассишĕн фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе учрежденисенче малашне те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕç.

Малалла, Хĕвеланăçнелле кайăр, тăван воинсем, тыл сирĕншĕн нимĕн те шеллесе тăмĕ.

Тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе пырăр, хамăрăн таса çĕре гитлерла ирсĕрсенчен тасатăр!

Пире Аслă Ленинăн никам çĕнтереймен ялавĕ хавхалантарса пырать.

Пире генийллĕ полководец Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ çапăçăва ертсе каять!

Çĕнтерÿ çывăх, çĕнтерÿ пирĕнте пулать!

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

Пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

РСФСР Совнаркомĕ «8 çултан пуçласа 15 çула çитиччехи ачасемпе çамрăксене шута илес ĕçе организацилемелли инструкцие çирĕплетесси çинчен тата пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентмелли закона мĕнле пурнăçласа пынине контрольлесе тăмалли йĕркесем çинчен» 1943 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнче йышăннă 637-мĕш номерлĕ постановлени тăрăх, хуласемпе рабочи поселоксенче—ачасемпе çамрăксене пурне те обязательнăй йĕркепе 7 çул вĕрентессине, яллă вырăнсенче — пуçламĕш шкулсенче вĕрентессине пурнăçа кĕртес шутпа, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

1. Ĕççынни депутачĕсен ял, поселок тата хула Совечĕсен исполкомĕсене ялсовечĕн, поселокăн хулан территорийĕ çинче пурăнакан 8—15 çулхи ачасене тĕрĕс шута илсе тухма тата ачасем шкула мĕнле çÿренине инструкцире кăтартнă пек контрольлесе тăма хушас.

2. Ачасене шкула вăхăтра вырнаçтармашкăн тата ачасене шкула йĕркеллĕ çÿреме май туса памашкăн ачасен ашшĕ-амăшĕсене е вĕсене улăштаракансене, çавăн пекех тата всеобуч законне пăсакан ĕçлĕ çынсемпе учрежденисен руководителĕсене администрациллĕ йĕркепе ответ тыттармалла: 100 тенкĕ таран штраф тÿлеттермелле е пĕр уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле тăвас.

3. Ĕççынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсен исполком председателĕсене çак постановление мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине çирĕп контрольлесе тăма тата пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентессине вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ,

Чăваш АССР Совнаркомĕçĕсене тăваканĕ А. АМАЗОНОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи августăн 20-мĕшĕ.

Вылă шкулĕ çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕр мар

ЭЛĔК. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри чылай шкулсем кăçал çĕнĕ вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илеççĕ.

Писĕпри туллимар вăтам шкул коллективĕ кĕске вăхăт хушшинчех хăйне кирлĕ чухлĕ вутă хатĕрлерĕ, 135 кубометрне çийĕнчех турттарчĕ, пур кăмакасемпе партăсене те юсаса пĕтерчĕ.

Тавăтри, Йăлкăшри, Юманлăхри, Ураскильтри туллимар вăтам шкулсем те хĕл каçмалăх вутă хатĕрлерĕç, çак кунсенче ремонт ĕçне те вĕçлерĕç.

Вăтам шкулсенчен уйрăмах Вырăс Сурăм шкул коллективне палăртмалла (директорĕ Малинин юлташ). Ку коллектив темиçе эрне хушши вăрмантан тухмасăр вутă хатĕрлерĕ. Çав вăхăтрах шкулта ремонт ĕçне те вĕçлерĕç, кăмакасемпе класнăй доскасене сăрласа лартрĕç.

Анчах та Вылăри вăтам шкул вĕренÿ çулне çителĕксĕр хатĕрленет. Шкулăн хĕл каçма 450 кубометр вутă хатĕрлемелле. Шкул коллективĕ ăна хăй вăйĕпех хатĕрлеме пултарнă. Анчах шкул директорĕн Димитриевăн тимсĕрлĕхне пула паян кун та вутă хатĕрлес ĕçе 25 процент ытларах çеç пурнăçланă. Вылăри вăтам шкулта классем те йĕркеллĕ мар, ремонт ĕçĕ юлса пырать.

Нумаях та пулмасть, районри шкул директорĕсемпе заведующийĕсен канашлăвĕнче çак çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме хушса хăварнăччĕ. Апла пулин те Вылă, Чăваш Сурăм шкулĕсенче улшăнусем туни курăнмасть. Районри çутĕç пайĕн çак шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хăвăртрах хатĕрленсе çитме пулăшмалла.

Х. ЛИСИН.

Вĕренÿ çулне хатĕрленме те тытăнман

ИШЛЕЙ. Районри шкулсем çитес вĕренÿ çулне хĕрсе хатĕрленеççĕ. Кипеккассинчи туллимар вăтам шкул (директорĕ Петрова юлташ) вĕренÿ çулне пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ. Шкулти классене юсанă. Партăсемпе сĕтелсем çителĕклĕ. Хĕле кирлĕ таран вутă хатĕрлесе турттарнă. Çавăн пекех Шорча, Янăш, Мăнал туллимар вăтам шкулĕсем те вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитнĕ темелле. Анчах та Алинăри пуçламĕш шкул (заведующийĕ Терентьева), Чурачăкри туллимар вăтам шкул (директорĕ Орлова) çитес вĕренÿ çулне хатĕрленме те тытăнман. Асăннă шкулсенче пĕр кубометр вутă та хатĕрлемен. Мĕн шутлаççĕ-ши кунти руководительсем?

А. ТОЛСТОВ.

ВКП(б) Шупашкар горкомĕн пленумĕ

Çак кунсенче ВКП(б) Шупашкар горкомĕн V-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум пĕр ыйту—Сталин юлташăн «Совет Союзĕн отечественнăй аслă вăрçи çинчен» калакан кĕнекине вĕренес ыйтăва сÿтсе-яврĕ. Ку ыйтупа ВКП(б) горкомĕн секретарĕ Федоров юлташ доклад туса пачĕ.

Сталин юлташăн уйрăм доклачĕсемпе приказĕсене ĕççыннисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе хулари парторганизаци чылай ĕçсем туса иртернĕ. ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ 500-ре яхăн докладсемпе лекцисем ирттернĕ, Сталин юлташăн выступленийĕсене ăнлантарса панă. Çулпуçăн 1943 çулхи майăн 1-мĕшĕнчи приказне вĕренме хулара 33 кружок организациленĕ пулнă.

Хулари ĕççынисем Сталин юлташăн выступленийĕсене хавассăн кĕтсе илеççĕ. Унăн кăтартăвĕсене шута илсе, хулари рабочисемпе служащисем тата хула таврашĕнчи колхозниксем хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлесе фронта пулăшаççĕ. Хула промышленноçĕ 1942 çулта 1940 çултинчен темиçе хут ытларах продукци панă, кăçалхи çурçул планне 109 процент тултарнă. Государство заемĕсене ăнăçлăн сарни, самолетсемпе танксем тума укçа пухас ĕç пысăк çĕкленÿпе пулса иртни, фронтовиксем валли ăшă тумтирсемпе парнесем пухас ĕçе активлăн хутшăнни тата ытти ĕçсем те хулари ĕççыннисен патриотизмĕ пысăк пулнине тата вĕсем Сталин юлташ чĕнсе каланисене хапăл туса кĕтсе илнине кăтартса параççĕ.

Кунпа пĕрлех Сталин юлташăн выступленийĕсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе парторганизаци ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем те пур-ха. Хулари интеллигенци хушшинче çулпуçăн выступленийĕсене вĕренес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Торфопредприятири, республикăри прокуратурăри пуçламĕш парторганизацисем çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шаннă. Кунта коммунистсен вĕренÿре кирлĕ пек пулăшу памаççĕ. Парторганизацисен секретарĕсемпе учрежденисен руководителĕсем чылайĕшĕ ĕççыннисен пухăвĕсенче политикăллă докладсем туса памаççĕ. Мехлесопунктри, çыхăну конторинчи тата ытти хăшпĕр парторганизацисем юлашки вăхăтра массăллă-политикăллă ĕçе вăйсăрлатрĕç. Чăлха фабрикинчи, Наркомздраври парторганизацисем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн отечественнăй аслă вăрçи çинчен» калакан кĕнекине тĕплĕн вĕренес ĕçе организацилес енĕпе халиччен те нимĕнех те туман-ха.

Федоров юлташ доклачĕ тăрăх прени пулса иртрĕ.

— Сталин юлташăн кашни выступленине,—тет пĕр предприятири парторганизаци секретарĕ Полукаров юлташ,—пирĕн коллектив пысăк савăнăçпа кĕтсе илет. Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ пирĕн войскăсем Харьков хулине ирĕке кăларнă ятпа панă приказа рабочисем пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Бригадир Голубчиков талăкри графика 200 процентран кая мар, бригадир Наумов 250 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕç. Рабочисем хăйсен обязательствисене ĕçпе çирĕплетсе параççĕ.

Сталин юлташăн кĕнекине тĕплĕн вĕренес ĕçе организацилес майпа партбюро членĕсем тата парторганизацисен секретарĕсем коммунистсемпе комсомолецсенчен тата партире тăман активран вĕсем мĕнле вĕренме шутлани çинчен ыйтса пĕлчĕç. Нумайĕшĕ кĕнекене харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пулчĕç. Сахалтарах хатĕрленнĕ юлташсем валли партбюро чылай кружоксем организацилерĕ, пропагандистсене уйăрса палăртрĕ. Чăвашла вĕренес текенсем валли уйрăм кружок организациленĕ. Халĕ парторганизаци литература хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлет.

Пренире Брикер, Ислюков, Малькова, Хохлов юлташсем тухса каларĕç. ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов юлташ Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе парти организацисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Федоров юлташăн доклачĕ тăрăх пленум решени йышăнчĕ. Сталин юлташăн «Совет Союзĕн отечественнăй аслă вăрçи çинчен» калакан кĕнеки виççĕмĕш хут пичетленсе тухни большевикла партипе совет халăхĕн пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сталин юлташăн кĕнеки «ВКП(б) историн Кĕске Курсне» малалла аталантарни пулса тăрать, вăл совет халăхĕн пурнăçĕнчи çĕнĕ тапхăра—отечественнăй аслă вăрçă тапхăрне çутатса парать. Çак кĕнеке пирĕн кадрсене отечественнăй вăрçăн пуласлăхне ăнланса илме пулăшать, пире нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме вĕрентет. Сталин юлташăн «Совет Союзĕн отечественнăй аслă вăрçи çинчен» калакан кĕнекине тĕплĕн вĕренесси кашни коммунистăн, комсомолецăн, совет работникĕн, профсоюзпа хуçалăх работникĕсен тăван ĕçĕ пулса тăрать. Çак ĕçе организацилесси хулари парторганизацин чи пысăк задачисенчен пĕри пулмалла. Пленум партипе комсомол организацисене Сталин юлташăн кĕнекине вĕренесси çинчен çывăх вăхăтрах пухусенче сÿтсе-явма, ВЛКСМ горкомне пленумра сÿтсе-явма хушса хăварчĕ. Хулари интеллигенци хушшинче çулпуç кĕнекине вĕренес ĕçе организацилес тĕлĕшпе тата вăл кĕнеке çинчен хулари ĕççыннисене агитколлективсем урлă ăнлантарса парас тĕлĕшпе пленум практикăллă мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Пленумра ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков тата Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташсем пулчĕç.

Тăшмана хĕрÿ ĕçпе çĕмĕрсе пырар!

Харьков пирĕн! Çак хыпар совет ĕççынниЙĕсене мĕнтери савăнăç кÿнине сăмахпа çырса кăтартма та çук.

Главнăй инженер пулса Челноков юлташ ĕçлекен заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем Сталин юлташăн приказне радио тăрăх итлерĕç. Тăван çĕршывăн столици—Мускав хамăрăн Харьков хулине ирĕке кăларнă паттăр войскăсене хисеплесе икçĕр çирĕм тăватă тупăран çирĕм хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе саламланă вăхăтра çĕрлехи сменăра ĕçлекенсем кашниех тăван çĕршывпа фронт умĕнче çакăн пек тупа тунă:

— Тăшмана фронтра—вутпа, тылра—хĕрÿ ĕçпе çĕмĕрсе пырăпăр!

Ирхине, ĕç пуçланас умĕн, пур цехсенче те савăнăçлă митингсем пулса иртрĕç. Пĕр цехри митингра парторг П. Фролов çапла каларĕ:

— Харькова нимĕçсен фашистла мерзавецĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă паттăр войскăсене чыс та мухтав! Çак историллĕ çĕнтерĕве тума вĕсене çăмăл пулман, анчах унăн тивлечĕ питех те савăнăçлă пулчĕ. Нимĕç оккупанчĕсене Украинăран хăваласа кăларас ĕçе Хĕрлĕ Çар малалла та ăнăçлăн туса пырать. Тăшмана Хĕвеланăçнелле хĕссе пыракан паттăр воинсене Украинăн çĕнĕ хулисене ирĕке кăларма мĕнпур вăй-халпа пулăшар!

Çак цехри комсомолецсен Наумов юлташ ертсе пыракан Хĕрлĕ ялавлă фронтовой бригади, Харьковски дивизисене чысласа, нормăна 250 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕ. Çавăн пекех Васильева, Жирнова, Голубчиков комсомолецсем ертсе пыракан фронтовой бригадăсем те нормăна 180—225 процентран кая мар тултарма пулчĕç.

Б. М.

Тухăçлăн ĕçлеме хавхалантаракан приказ

КАНАШ. Августăн 24-мĕшĕ. (**Хамăр корр., телефонпа**). Вагонсем юсакан заводри каçхи сменăра ĕçлекенсем Сталин юлташ Харьков хулине илнĕ войскăсене саламласа панă приказа тулли кăмăлпа итлерĕç. Çак савăнăçлă хыпар рабочисемпе работницăсен производствăри хастарлăхне ÿстерчĕ. Каçхи сменăра ĕçлекенсем хушшинче нормăна тултарманнисем пачах та пулмарĕç.

Паян ирхине, ĕç пуçланас умĕн, Сталин юлташ приказ панă ятпа пур цехсенче те митингсем пулса иртрĕç. Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнÿсемпе хавасланса, рабочисемпе работницăсем нормăна кашни кун 200 процент тултарса ĕçлеме сăмах пăраççĕ. Завод паянхи плана 165 процент тултарчĕ. Заводра халĕ икĕ е виçĕ норма тултаракансем пĕрерĕн мар, вуншарăн шутланаççĕ. Соколовский юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри стахановец Притманный юлташ сменăри нормăна 417 процент тултарчĕ.

Завод коллективĕ паян август уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарчĕ. Халĕ продукци кăларассине малалла ÿстерсе пырассишĕн кĕрешет.

В. ВЕСЕЛОВ.

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсас тĕлĕшпе халех тумалли ĕçсем çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ ĕнерхи №-те).

V.

Колхозсемпе совхозсене 1943 çулта кĕрхи тырăсем акса хăварма вăрлăхсем парса пулăшасси çинчен

1. 1943 çулта тырпул туса илме кĕрхи тырăсем акса хăвармалли плана пурнăçа кĕртмешкĕн государство ресурсĕсенчен колхозсене ссуда йĕркипе 55.000 тонна кĕрхи тĕштырăсем парас, вăл шутран:

Воронеж облаçĕнчи колхозсене	—	4.000 тонна
Ростов облаçĕнчи »	—	16.000 »
Курск облаçĕнчи »	—	5.000 »
Украина ССР-ĕнчи »	—	12.000 »
Сталинград облаçĕнчи »	—	10.000 »
Смоленск облаçĕнчи »	—	5.000 «

2. Ростов облаçĕпе Украина ССР-ĕнчи колхозсене акмалли кĕрхи тырăсене продовольстви валли каякан тĕрлĕ çуртыррисем 1943 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр каялла тавăрса памалла условисемпе парас, çакна ăна улăштарса илмелли эквивалентсем тăрăх тумалла, кивçен панă тĕштырăн кашни 100 центнерĕ çине—2 центнер хушса, сортлă тĕштырă панă пулсан сортлăхĕшĕн те хушса тавăрса памалла тăвас.

Уйрăмăн илсен, Воронеж, Курск, Сталинград, Смоленск облаçĕсенчи тата Ставрополь крайĕнчи колхозсене кĕрхи тĕштырăсем 1944 çулхи тырпулран каялла тавăрса памалли условисемпе кивçен парас, кивçен панă кашни 100 центнер пуçне 10 центнер ÿстерсе тавăрса памалла тăвас.

3. Пĕрремĕш пунктра кăтартса панă облаççемпе республикăсен исполкомĕсемпе Совнаркомĕсен председателĕсене колхозсене кивçен панă вăрлăхсене çак постановленире кăтартса панă срокчен тавăрса партарассине пурнăçа кĕртме хăйсене тÿрех хушас.

4. Кунсăр пуçне СССР хатĕрлев Халăх Комиссариачĕпе Çĕрĕç Халăх Комиссариатне Госсортфондăн, Госстрахфондăн тата Заготзернон ресурсĕсенчен колхозсене, кĕрхи тырăсене çурхи тулăпа, вирпе, хуратулпа тата пăрçа-ясмăкпа улăштарса илмелле туса, 40 пин тонна кĕрхи тĕштырăсем парас, вăл шутран: Сталинград облаçне—5 пин тонна, Воронеж облаçне—20 пин тонна, Ставрополь крайне—15 пин тонна парас. Çав тĕштырра, улăштармалли условисем тăрăх колхозсем хăйсем улăштаракан тĕштырра Заготзернон станцисемпе пристаньсенчи пункчĕсене леçсе панă хыççăн памалла.

5. Колхозсене, вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тĕштырăсемсĕр пуçне, кĕрхи тырăсен пĕтĕмĕшлĕ çĕрлантăкĕсенчен пухса илнĕ тырра 55 пин тонна илсе, унпа акнă çĕрте усă курма ирĕк парас, вăл шутран Сталинград облаçĕ тăрăх—100 пин тонна, Ставрополь крайĕ тăрăх—20 пин тонна тата Краснодар крайĕ тăрăх—25 пин тонна.

6. Çулйĕр Халăх Комиссариатне, 1943 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, Украина ССР-ĕн Ворошиловград тата Харьков облаçĕсене, Заготзерно пункчĕсем ыйтнă тăрăх, вăрлăх валли 12 пин тонна тĕштырă турттарса кайма хушас.

7. СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсене, улăштармалли эквивалентсем тăрăх, тĕрлĕ йышши тĕштырăсемпе çу тумалли культурăсем улăштарса илес йĕркепе 16.870 тонна кĕрхи тĕштырăсем парас, вăл шутран Воронеж облаçне—2.500 тонна, Краснодар крайне—8.000 тонна, Ставрополь крайне—6.000 тонна, Курск облаçне—120 тонна, Калмык АССР-не—250 тонна парас.

СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсене Сталинград облаçĕ тăрăх—4 пин тонна, Ростов облаçĕ тăрăх—4 пин тонна кĕрхи тырăсем кивçен парас. Çакна ăна 1944 çулхи тырпулран каялла улăштарса илмелли условисемпе, кивçен панă кашни 100 центнер пуçне 10 центнер ÿстерсе тавăрса памалла условисемпе, памалла тăвас, çавăн пекех тата Сталинград облаçĕнчи совхозсене 1943 çулта пухса илнĕ мĕнпур кĕрхи тырăсемпе акнă çĕрте усă курма ирĕк парас.

VI.

Машинно тракторнăй станцисене тата машинно-тракторнăй мастерскойсене çĕнĕрен йĕркелесе ямалли мерăсем çинчен

Орел облаçĕ тăрăх.

1. Орел облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне 1943 çулта 33 МТС-а, текущи ремонт тумалли 33 мастерской тата капитальнăй ремонт тумалли 3 мастерской çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

2. СССР Наркомземне çак ĕçсене тума хушас:

а) Орел облаçĕнчен куçарса кайнă станоксене, оборудование, 600 трактора, 600 трактор плугне тата 600 трактор сеялкине Орел облаçне каялла тавăрса памалла, вĕсем пурте юсавлă пулмалла; çав кăтартнă шутран Рязань облаçĕнчен 300 трактор, 300 плуг, 100 сеялка, Тамбов облаçĕнчен 300 трактор, 300 плуг, 100 сеялка тавăрса памалла;

б) ремонт мастерскойĕсем тумашкăн СССР Наркомземĕн пĕтĕм смети шутĕнчен 3 миллион тенкĕ укçа памалла.

3. Хĕрлĕ Çарăн УСГ-не тăшмантан тытса илнĕ пурлăхран Орел облаçĕнчи МТС-сем валли 1.500 пичке уйăрса пама хушас.

4. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне III-мĕш кварталта Орел облаçĕнчи колхозсем валли СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 200 жнейка, 240 сенокосилка, 2.000 лаша плугĕ, 250 сортировка тиесе яма тата 250 комбайна йĕркелесе яма кирлĕ запаслă пайсене 10 кун хушшинче тиесе яма хушас.

Смоленск облаçĕ тăрăх.

5. Смоленск облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне 1943 çулта 17 МТС-а, капитальнăй ремонт тумалли 2 мастерской тата текущи ремонт тумалли 25 мастерской çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

6. СССР Наркомземне çак ĕçсене тума хушас:

а) Горький облаçне куçарса кайнă 250 трактора, 250 трактор плугне тата 100 трактор сеялкине Смоленск облаçне каялла тавăрса памалла, вĕсем пурте юсавлă пулмалла;

б) ремонт мастерскойĕсем тумашкăн СССР Наркомземĕн пĕтĕм смети шутĕнчен Смоленск облаçне 3 миллион тенкĕ памалла.

7. ВКП(б) Куйбышев обкомĕ шеф йĕркипе пулăшас тесе Смоленск облаçĕнчи 20 мастерской валли оборудовани уйăрса хуни çинчен пĕлтернине асра тытас.

8. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне III-мĕш кварталта Смоленск облаçĕнчи колхозсемпе МТС-сем валли СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 150 жнейка, 150 сенокосилка, 1.500 лаша плугĕ, 250 сортировка, 50 трактор плугĕ тата 100 комбайна йĕркелесе яма кирлĕ запаслă пайсем тиесе яма хушас.

9. Хĕрлĕ Çарăн УСГ-не тăшмантан тытса илнĕ пурлăхран Смоленск облаçĕнчи МТС-сем валли 1500 пичке уйăрса пама хушас.

Калинин облаçĕ тăрăх.

10. Калинин облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне 1943 çулта текущи ремонт тумалли 24 мастерской тата капитальнăй ремонт тумалли 3 мастерской çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

СССР Наркомземне ремонт мастерскойĕсем тумашкăн хăйĕн пĕтĕм смети шутĕнчен 3 миллион тенкĕ укçа пама хушас.

11. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне III-мĕш кварталта Калинин облаçĕнчи колхозсем валли СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 150 жнейка, 150 сенокосилка, 150 лаша плугĕ, 250 сортировка тата 200 комбайна йĕркелесе яма кирлĕ запаслă пайсем тиесе яма хушас.

12. ВКП(б) Горький обкомĕ Калинин облаçĕнчи МТС-сем валли металл касакан 82 станок, электричествăпа хĕртсе çыпăçтаракан 17 аппарат тата 25 мотор уйăрса хуни çинчен пĕлтернине асра тытас.

13. СССР Наркомземне 1943 çулта МТС-сен пурăнмалли тата çынна ялан кирлĕ çуртйĕрсене çĕнĕрен йĕркелесе яма 2 миллион тенкĕ, 650 трактора çĕнĕрен йĕркелесе яма 1,3 миллион тенкĕ укçа пама хушас.

Курск облаçĕ тăрăх.

14. СССР Наркомземĕпе СССР Госпланне IV-мĕш кварталта Курск облаçĕнчи МТС-сем валли СТЗ НАТИ маркăллă 350 трактор уйăрса пама тата Пензăпа Саратов облаçĕсенчен 150 трактор илсе пыма хушас, çав тракторсем юсавлă пулмалла.

15. Курск облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне 1943 çулта 15 МТС-а, текущи ремонт тумалли 40 мастерской тата капитальнăй ремонт тумалли 12 мастерской çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

16. Тамбов облисполкомне Курск облаçĕнчен ĕлĕкрех куçарса пынă Крестищенски тата Аненски МТС-сене, Воронеж облисполкомне — Чербунски МТС-а Курск облаçне каялла тавăрса пама хушас, вĕсене мĕнпур тракторĕсемпе, пурлăхĕсемпе, оборудованийĕсемпе тата кадрĕсемпе пĕрле тавăрса памалла.

17. Курск облисполкомĕпе РСФСР Наркомместпромне Дмитровск заводĕнче колхозсем валли обоз инвентарĕ тăвас ĕçе организацилеме хушас.

18. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне кăçалхи III-мĕш кварталта СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 1.700 лаша плугĕ, 240 сенокосилка, 215 жнейка тата 250 сортировка тиесе яма хушас.

Воронеж облаçĕ тăрăх.

19. Воронеж облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне 1943 çулта капитальнăй ремонт тата текущи ремонт тумалли 44 мастерской çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

СССР Наркомземне ремонт мастерскойĕсене çĕнĕрен йĕркелесе ямашкăн хăйĕн пĕтĕм смети шутĕнчен 5 миллион тенкĕ укçа пама хушас.

20. СССР Наркомземне Саратов облаçĕнчи Пугачев заводĕнчен металл касакан 45 станока Липецк заводне каялла тавăрса пама ирĕк парас.

21. Воронеж облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне тата СССР Наркомземне 1943 çулта Острогожскри моторсем юсакан завода çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

22. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне III-мĕш кварталта Воронеж облаçне СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 1000 лаша плугĕ, 150 сенокосилка, 150 жнейка тата 350 сортировка илсе пыма хушас.

23. СССР Наркомземне тата Саратов облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне Саратов облаçĕнчен икĕ МТС-а вĕсен мĕнпур тракторĕсемпе, оборудованийĕсемпе тата кадрĕсемпе пĕрле Воронеж облаçне тавăрса парса вĕсен ĕçне йĕркелесе яма хушас.

Краснодар крайĕ тăрăх.

24. Краснодар крайисполкомĕпе ВКП(б) крайкомне 1943 çулта текущи ремонт тумалли 92 мастерской, капитальнăй ремонт тумалли 5 мастерской тата Краснодарти моторсем юсакан завода çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

СССР Наркомземне çав мастерскойсене тата моторсем тăвакан завода çĕнĕрен йĕркелесе ямашкăн хăйĕн смети шутĕнчен 5 миллион тенкĕ укçа пама хушас.

25. Краснодар крайисполкомне 1943 çулта РСФСР Наркомместпромĕн пăта завочĕн продукцине Краснодар крайĕнчи ялхуçалăхне ура çине тăратас ĕçе яма ирĕк парас.

26. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне кăçалхи III-мĕш кварталта Краснодар крайне СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 200 лаша плугĕ, 50 трактор плугĕ, 80 сенокосилка, 50 жнейка, 50 сортировка тиесе яма хушас.

Сталинград облаçĕ тăрăх.

27. Сталинград облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне текущи ремонт тумалли 65 мастерской çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

СССР Наркомземне çав мастерскойсене çĕнĕрен йĕркелесе ямашкăн хăйĕн пĕтĕм смети шутĕнчен 3,5 миллион тенкĕ укçа пама хушас.

28. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне кăçалхи III-мĕш кварталта Сталинград облаçне СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 100 сенокосилка, 100 жнейка, 140 сортировка, 700 лаша плугĕ тата 50 трактор плугĕ тиесе яма хушас.

29. Сталинград облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне тăшмантан ирĕке кăларнă районсенчи мастерскойсене çĕнĕрен йĕркелесе ямашкăн Сталинградпа Астрахань хулисенчи заводсенче 30 токарнăй станок, 40 пăралакан станок, 30 расточнăй станок, 10 саваласкан станок, 10 фрезернăй станок, 10 якатакан станок тата электричествăпа хĕртсе çыпăçтаракан 10 аппарат уйăрса илме ирĕк парас.

Ставрополь крайĕ тăрăх.

30. Ставрополь крайисполкомĕпе ВКП(б) крайкомне 1943 çулта текущи ремонт тумалли 20 мастерской тата капитальнăй ремонт тумалли мастерской çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

СССР Наркомземне çав ĕçе тумашкăн хăйĕн смети шутĕнчен 3 миллион тенкĕ укçа пама хушас.

31. Ставрополь крайисполкомне РСФСР Наркомместпромĕн Георгиевскри пăта завочĕн продукцине тата Пятигорскри моторсем юсакан заводăн продукцине 1943 çулта крайри ялхуçалăхне ура çине тăратас ĕçе яма ирĕк парас.

32. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне кăçалхи III-мĕш кварталта Ставрополь крайне СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 200 лаша плугĕ, 50 трактор плугĕ, 60 сенокосилка, 40 жнейка, 50 сортировка тиесе яма хушас.

Ростов облаçĕ тăрăх.

33. Ростов облисполкомĕпе ВКП(б) обкомне 1943 çулта Морозоври тата Ростоври ремонт завочĕсене, текущи ремонт тумалли 30 мастерской тата капитальнăй ремонт тумалли 10 мастерской çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

СССР Наркомземне çав мастерскойсемпе ремонт завочĕсене çĕнĕрен йĕркелесе ямашкăн хăйĕн пĕтĕм смети шутĕнчен 3,5 миллион тенкĕ укçа пама хушас.

34. СССР Наркомземне Азербайджан ССР-ĕнчи Кировобадри ремонт заводĕнчен металл касакан станока, юсамалли оборудование тата преса Ростоври электроремонтнăй завода тавăрса пама хушас.

35. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне кăçалхи 3-мĕш кварталта Ростов облаçне СССР Наркомземĕн фончĕсенчен 200 лаша плугĕ, 50 трактор плугĕ, 80 сенокосилка, 48 сортировка, 60 жнейка тиесе яма хушас.

36. РСФСР Наркомместпромне Ростов облаçĕнчи ялхуçалăхне ура çине тăратмашкăн Ростоври пăта заводĕнче пăта туса кăларассине ÿстерме хушас.

Украина ССР-ĕ тăрăх.

37. УССР Совнаркомне тата Украинăри коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетне 1943 çулта Харьковпа Сумы облаçĕсен ирĕке кăларнă районĕсенчи 18 МТС-а çĕнĕрен йĕркелесе яма хушас.

38. СССР Наркомземĕпе НКПС-а кăçалхи октябрĕн 15-мĕшĕччен УССР районĕсене юсавлă 400 трактор тата 200 трактор плугĕ илсе пыма хушас; çав шутран 100 тракторпа 48 трактор плугне Куйбышев облаçĕнчен, 50 трактора Мордва АССР-ĕнчен, 50 тракторпа 24 трактор плугне Пенза облаçĕнчен, 50 тракторпа 24 трактор плугне Рязань облаçĕнчен, 150 тракторпа 104 трактор плугне Саратов облаçĕнчен илсе пымалла. Вĕсене СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б)-н 1943 çулхи январĕн 23-мĕшĕнчи 89-мĕш номерлĕ постановленийĕнче кăтартнă йĕркепе илсе пымалла.

39. СССР Наркомземне УССР-ĕн ирĕке кăларнă районĕсенчи 18 МТС-а çĕнĕрен йĕркелесе ямашкăн хăйĕн пĕтĕм смети шутĕнчен 900 пин тенкĕ укçа пама хушас.

40. УССР Совнаркомĕпе ЦК КП(б)У-на 1943 çулти IV-мĕш кварталта ремонт тăвакан виçĕ завода, капитальнăй ремонт тăвакан виçĕ мастерская тата МТС-сем çумĕнчи 18 мастерская йĕркене кĕртме хушас.

Ремонт тăвакан заводсене тата капитальнăй ремонт тăвакан машинно-тракторнăй мастерскойсене йĕркелесе яма СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе УССР Совнаркомне Украинăран халиччен эвакуациленĕ ремонт тăвакан заводсемпе машинно-тракторнăй мастерскойсенчен çакăн пек оборудованисем тавăрса пама ирĕк парас:

токарнăй станоксем —	45 штука
сверло станокĕсем —	15 штука
хăйрамалли станоксем —	4 штука
фрезер станокĕсем —	5 штука
переменнăй ток генераторĕсем (15—25 киловатлисем) —	3 штука
электромоторсем (2—5 киловатлисем) —	45 штука

41. Миномет хĕçпăшалĕн Халăх Комиссариатне кăçалхи çулăн виççĕмĕш кварталĕнче Украина ССР-ĕн ирĕке кăларнă районĕсене СССР Наркомзем фончĕн шутĕнчен çакăн пек хатĕрсем ăсатма хушас:

трактор плугĕсем —	20 штука
сенокосилкăсем —	300 штука
сортировкăсем —	500 штука

Материалсемпе техника тĕлĕшĕнчен снабжени парса тăрасси çинчен

42. Наркомчермета, Наркомцветмета, станкостроени Наркоматне, Наркомрезинопрома, Наркомтекстильпрома, Наркомсредмаша, Хĕçпăшалсен Наркоматне, РСФСР Наркомместпромне 1943 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕччен СССР Наркомземĕн разнарядкисем тăрăх тата унăн виççĕмĕш кварталти фондĕнчен Смоленск, Калинин, Орел, Воронеж, Ростов, Сталинград облаçĕсене, Краснодарпа Ставрополь крайĕсене тата Украина СССР-не ялхуçалăх машинисем валли материалсемпе запаслă пайсем тиесе ăсатма хушас.

43. ССР Союзĕн Госпланне, 1943 çулхи тăваттăмĕш квартал валли япаласем валеçнĕ чухне, ирĕке кăларнă районсенче хуçалăха юсассипе строительство ĕçĕсем валли СССР Наркомземне çакăн пек материалсене уйăрса памашкăн палăртма хушас:

çурман йывăç —	10.000 кубометр
çурнă йывăç —	10.000 кубометр
фанера —	250
кантăк —	100.000 тăваткăл метр
цемент —	500 тонна
толь —	2500 рулон
олифа —	15 тонна
сурик —	10 тонна
белила —	5 тонна
пăта —	50 тонна

44. Ирĕке кăларнă районсенчи: Краснодарпа Ставрополь крайĕсенчи, Ростов, Сталинград, Воронеж, Курск, Орел, Калинин, Смоленск облаçĕсенчи тата Украина ССР-нчи тракторсен паркне кĕркуннехи уйхир ĕçĕсен тата кĕркуннепе хĕллехи ремонтăн тапхăрĕнче запаслă пайсем тупса парас шутпа Наркомсредмаша, Наркомтанкпрома, Наркомрезинпрома çапла тума хушас: вĕсен запаслă пайĕсене, тракторсен электрооборудовани деталĕсене, карбюрацисене, шариклă-роликлă подшипниксене тата резинăпа асбестран тунă япаласене, Глававтотракторосбытăн разнарядкисем тăрăх 1943 çулăн III-мĕш кварталĕ валли уйăрса панăскерсене, кăçалхи сентябрĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех тиесе ăсатмалла.

Тракторсем валли запаслă пайсем хатĕрлесе, вĕсене 1943 çулхи IV-мĕш квартал шучĕпе тата 1944 çулăн I-мĕш кварталĕ шучĕпе 1926—27-мĕш çулсенчи улшăнман хаксемпе шутласа, çакăн чухлĕ тиесе ăсатмалла:

Краснодар крайне—механически детальсем—3.316,8 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани — 359,6 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—84,8 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—76,8 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем—24.190 штука;

Ставрополь крайне—механически детальсем—2.023 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани—244,2 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—55,2 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—47,4 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем—15.340 штука;

Ростов облаçне—механически детальсем — 3.457,2 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани—352,8 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—90,4 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—75,6 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем—24.020 штука;

Сталинград облаçне—механически детальсем—3.674,4 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани—455,4 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—120,8 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—70,8 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем — 26.000 штука;

Украина СССР-не—механически детальсем—7.424,0 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани—857,9 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—203,2 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—169,8 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем — 52.985 штука;

Воронеж облаçне—механически детальсем 3.010,6 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани—409,2 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—92,8 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—70,8 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем — 24.600;

Курск облаçне—механически детальсем—1.512,1 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани 198,0 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—45,6 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—36,0 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем—11.905 штука;

Орел облаçне—механически детальсем—1.270,2 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани—161,7 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—46,6 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—22,8 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем — 9.100;

Калинин облаçне—механически детальсем—905,2 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани—112,2 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—33,6 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—15,0 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем — 6.215;

Смоленск облаçне—механически детальсем—823,3 пин тенкĕлĕх, электрооборудовани—90,0 пин тенкĕлĕх, карбюрацисем—28,0 пин тенкĕлĕх, резинăпа асбестран тунă япаласем—15,0 пин тенкĕлĕх, шариклă-роликлă подшипниксем — 5.585.

Çак постановлени тăрăх уйăрнă запаслă пайсен, электрооборудованин, карбюрацисен, резинăпа асбестран тунă япаласен тата шариклă-роликлă подшипниксен 50 процентне 1943 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне, тепĕр 50 процентне 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне тиесе ăсатмалла.

45. Çулйĕр Халăх Комиссариатне ирĕке кăларнă районсене запаслă пайсемпе материалсем ăсатмашкăн вагонсем татти-сыпписĕр парса тăма, питех те кирлĕ детальсене пысăк мар ушкăнсемпе багажсем туса йышăнма тата çав багажсене ăсатмашкăн пассажирсемпе çар поезчĕсем çумне вагонсем кăкарса ярассине йĕркелеме хушас. Запаслă пайсемпе материалсен грузĕсем чугунçулсем тăрăх мĕнле кайса тăнине куллен контрольлесе тăмалла тата вĕсене çар грузĕсемпе танах турттармалла.

Ирĕке кăларнă районсене кадрсем ярасси çинчен

46. Республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, ВКП(б) крайкомĕсемпе обкомĕсене—Воронеж, Курск, Сталинград, Ростов, Калинин, Орел тата Смоленск облаçĕсенчен, Краснодарпа Ставрополь крайĕсенчен, Украина ССР-ĕнчен куçса килнĕ ертсе пыракан çĕрĕç работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене вĕсем малтан ĕçленĕ вырăнсене 1943 çулхи октябрĕн 15-мĕшчен ăсатма хушас.

47. Ертсе пыракан работниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсене, ирĕке кăларнă районсенчи çĕрĕç органĕсенче ĕçлеме тавăрнаканскерсене, пурне те хăйсем ĕçлес çĕре çитмешкĕн СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулхи январĕн 23-мĕшĕнче йышăннă 89-мĕш номерлĕ постановленин 11-мĕш пункчĕ тăрăх материальнăй льготăсем тата укçа-тенкĕ тĕлĕшпе пулăшу памалла тăвас.

СССР Наркомземне эвакуациленĕ работниксене каялла тавăрас ĕçпе çыхăннă расходсене витме тата тракторсемпе ялхуçалăх машинисене ăсатас ĕçпе çыхăннă расходсене витме, пĕтĕм смета шутĕнчен 10 миллион тенкĕ таран расходлама ирĕк парас.

48. ССР Союзĕн Наркомземне 1943 çулта ялхуçалăх аслă шкулĕсемпе техникумĕсенчен вĕренсе тухакан çамрăк специалистсене çак вырăнсене çакăн чухлĕ хисеппе яма хушас: Воронеж облаçне—25 агроном, 3 зоотехник, 7 землеустроитель, 3 инженер-механик, 7 ветврач; Курск облаçне—68 агроном, 8 зоотехник, 12 ветврач, 11 землеустроитель, 10 инженер-механик; Сталинград облаçне—17 агроном, 1 зоотехник, 5 землеустроитель, 1 гидротехник, 9 инженер-механик; Ростов облаçне—21 агроном, 12 зоотехник, 12 ветврач, 2 гидротехник, 6 инженер-механик; Калинин облаçне—16 агроном, 1 зоотехник, 8 ветврач; Орел облаçне—18 агроном, 7 ветврач, 5 землеустроитель, 7 инженер-механик; Смоленск облаçне—7 агроном, 6 ветврач, 3 инженер-механик; Краснодар крайне—18 агроном, 10 зоотехник, 10 ветврач, 5 землеустроитель, 2 гидротехник, 8 инженер-механик; Ставрополь крайне—17 агроном, 10 зоотехник, 12 ветврач, 4 гидротехник, 3 инженер-механик.

МТС-сем валли горючипе сĕрмелли çусем кÿресси çинчен

49. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба ирĕке кăларнă районсенчи ялхуçалăхĕ валли тата хуçалăха юсамалли ĕçсем валли горючипе сĕрмелли çусем кÿрсе парассине кирек мĕнле условисем пулсан та çак сроксенче вĕçлеме хушас:

	Августри фондсем тăрăх	Сентябрьти фондсем тăрăх
Калинин облаçĕ	24.VIII	10.IX
Смоленск облаçĕ	25.VIII	5.IX
Орел облаçĕ	25.VIII	10.IX
Курск облаçĕ	27.VIII	10.IX
Воронеж облаçĕ	27.VIII	19.IX
Сталинград »	25.VIII	15.IX
Ростов »	27.VIII	22.IX
Краснодар крайĕ	27.VIII	20.IX
Ставрополь »	27.VIII	20.IX
Украина ССР	25.VIII	14.IX

Ирĕке кăларнă районсене Грознийран, Саратовран тата Мускавран автомобильсем валли бензин турттарассине оборона наркомачĕ валли турттарнă пекех туса пымалла.

50. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба тата СССР Наркомземне ирĕке кăларнă районсене валли 1943 çулăн III-мĕш кварталĕ валли нефтепродуктсем çĕнĕрен çакăн чухлĕ уйăрса пама хушас:

	Краççин	Автобензин
	(тоннăпа)	
Орел облаçне	3.000	80
Курск облаçне	3.000	150
Калинин облаçне	2.000	70
Смоленск облаçне	1.000	100
Украина ССР-не	1.500	100
Пĕтĕмпе	10.500	500

6.000 тонна краççина тата 250 тонна автобензина Главнефтеснаб ресурсĕсен шутĕнчен, ыттине вара — СССР Наркомзем фончĕн шутĕнчен уйăрса памалла.

51. Çулйĕр Халăх Комиссариатне çапла тума хушас:

а) ирĕке кăларнă районсене çак постановленин пĕррремĕш пунктĕнче пăхнă сроксенче горючипе сĕрмелли çусем турттарса каймашкăн, Главнефтеснабăн нефтепродуктсем турттармалли планĕ шутĕнчен, цистернăсем памалла;

б) Грознийпа Армавир хушшинчи краççин пăрки тăрăх краççин ăсатма, Махач-Каларан Грозныя краççина турттармашкăн 1943 çулхи августпа сентябрь тапхăрĕ валли виçĕ куклăх

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсас тĕлĕшпе халех тумалли ĕçсем çинчен

(Малалли).

срокра пĕр вертушка организацилемелле.

52. Хĕрлĕ Çарăн тыл начальникне—Калинин, Смоленск, Курск, Орел облаçĕсене тата Украина ССР-не нефтепродуктсем турттарассине, çавăн пекех тата Ростов облаçĕ, Краснодарпа Ставрополь крайĕсем валли Грозныйран бензин турттарассине, Махач-Каларан автолпа лигроин турттарассине, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаб заявкисем тăрăх, çар транспорчĕсемпе туса ирттерме хушас.

53. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба тата Наркомречфлота 1943 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен Камышинри тата Сталинградри нефтебазăсене 32.000 тонна трактор краççинĕ, 3.000 тонна лигроин тата дизельсем валли 3.000 тонна топливо турттарса хума хушас, вĕсене унтан Сталинград, Воронеж, Курск облаçĕсене турттарса каймалла пулать.

54. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба тата Наркомморфлота 1943 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнчен Махач-Калана 12.000 тонна трактор краççинĕ, 4.500 тонна лигроин, 4.500 тонна автол турттарса хума хушас, вĕсене кайран çак вырăнтан Çурçĕр-Кавказпа Украина ССР-не турттарса каймалла пулать.

55. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба, ирĕке кăларнă районсене тивĕçтермешкĕн трактор краççинĕн ресурсĕсене ÿстерес шутпа, пиролизнăй заводсене трактор краççинĕ вырăнне çутмалли краççин парса тăма ирĕк парас.

56. Нефть Халăх Комиссариатне 1943 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕччен Орскри нефть тасатакан заводра ялхуçалăхĕ валли 6.000 тонна трактор краççинĕ туса кăларма хушас.

57. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба Грозныйпа Армавир хушшинчи краççин пăркине, Нефть Халăх Комиссариатне вара— Махач-Калапа Грозный хушшинчи краççин пăркине пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле тума хушас.

VII.

Колхозниксемпе рабочисен тата служащисен пурăнмалли çурт-йĕрĕсене юсас тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе пулăшу парасси çинчен

1. Курск, Орел, Воронеж, Калинин, Сталинград, Ростов облаçĕсенчи, Краснодарпа Ставрополь крайĕсенчи партипе совет организацийĕсен халех пурнăçа кĕртмелли задачисем çаксем пулса тăраççĕ тесе шутлас: халĕ çĕр пÿртсемпе ишĕлнĕ çуртсенче пурăнакан колхозниксемпе рабочисене, служащисене пурăнма юрăхлă çуртсене вырнаçтарса тухас шутпа, нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă ялсемпе хуласенче тата рабочи поселоксенче вырăнти строительство материалĕсенчен пурăнмалли çуртсене халех юсамалла тата çĕнĕрен тумалла.

2. РСФСР Совнаркомне тата тивĕçлĕ ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене, облаçсен (крайсен) исполкомĕсене 1943 çулта çакăн пек предприятисене туса çитерсе ĕçе яма хушас:

Курск облаçĕнче—тăмран çуртсем тумалли блоксем хатĕрлесе кăларакан завод (унăн хăвачĕ çулталăкра 2.500 тонна блок туса кăлармалла пулать) тата камышит туса кăларакан икĕ завод (вĕсен кашнин хăвачĕ çулталăкра 20 пин тăваткăл метр камышит туса кăлармалла пулать);

Орел облаçĕнче—Мценскпа Орел районĕнче—шлакпа бетонран çурт тумалли чулсем хатĕрлекен икĕ завод (вĕсен хăвачĕсем кашнин çулталăкра 235 пин чул туса кăлармалла пулать);

Воронеж облаçĕнче—Острогожскпа Россошь районĕсенче—камышит туса кăларакан икĕ завод (вĕсен кашнин хăвачĕ çулталăкне 20 пин тăваткăл метр камышит туса кăлармалла пулать); шлакпа бетонран блоксем туса хатĕрлекен завод (унăн хăвачĕ çулталăкра 235 пин блок туса кăлармалла пулать); Воронеж хулинче—тăмран çуртсем тумалли блоксем туса кăларакан завод (унăн хăвачĕ çулталăкне 2,5 пин тонна глинит туса кăлармалла пулать);

Калинин облаçĕнче—Ржев хулинче известь завочĕ (унăн хăвачĕ çулталăкра 15 пин тонна известь туса кăлармалла пулать); Старицăпа Торжок хулисенче—çулталăкра кашни 2 пин тонна известь кăлармалăх икĕ известь завочĕ; кунсăр пуçне, 1943 çулта Шлинскри йывăç касакаласа строительство деталĕсем хатĕрлекен завода юсаса ĕçе ямалла (унăн хăвачĕ çулталăкне 20 пин метр чухлĕ деталь туса кăлармалла пулать); Калинин хулинче черепица туса кăларакан «Пионер» ятлă завод (унăн хăвачĕ çулталăкра 400 пин штука черепица тата 200 пин тăваткăл метр керамика хăмисем туса кăлармалла пулать);

Сталинград облаçĕнче—Сталинград тата Камышин хулисен районĕсенче—тăмран çуртсем тумалли блоксем туса кăларакан икĕ завод (вĕсен кашнин хăвачĕ çулталăкра 2,5 пин тонна туса кăлармалла пулать); Камышин хулинче—Баскунчак районĕнчи гипс пуянлăхĕсемпе усă курса алебастр туса кăларакан завод (унăн хăвачĕ çулталăкра 1 пин тонна туса кăлармалла пулать);

Ростов облаçĕнче—Ростовпа Шахты хулисен районĕсенче— камышит туса кăларакан икĕ завод (вĕсен кашнин хăвачĕ çулталăкра 20 пин тăваткăл метр камышит туса кăлармалла пулать); Батайскпа Азов районĕсенче—камышит туса кăларакан икĕ завод (вĕсен кашнин хăвачĕ çулталăкра 20 пин тăваткăл метр камышит туса кăлармалла пулать); Каменск районĕнче—пысăк мар цемент завочĕ;

Краснодар крайĕнче—Майкоп хули районĕнче çулталăкра 5 пин тонна известь туса кăларма пултаракан известь завочĕ; камышит туса кăларакан завод (унăн хăвачĕ çулталăкра 20 пин тăваткăл метр камышит туса кăлармалла пулать); шлакпа бетонран çуртсем тумалли блоксем хатĕрлекен завод (унăн хăвачĕ çулталăкра 235 пин штука блок туса кăлармалла пулать); çавăн пекех тата Краснополянск рудникĕнче çуртсем çине витмелли сланецсем кăларассине юсаса ямалла (унăн хăвачĕ çулталăкра 25 пин тăваткăл метр сланец кăлармалла пулать), Армавир хулинче çу кăларакан заводăн отхочĕсенчен зольцемент туса кăларассине организацилемелле (унăн хăвачĕ çулталăкра 3 пин тонна зольцемент туса кăлармалла пулать);

Ставрополь крайĕнче—алебастр туса кăлармалли тата унран строительство материалĕсем хатĕрлемелли икĕ завод (вĕсен кашнин хăвачĕ çулталăкра 1 пин тонна туса кăлармалла пулать), çавăн пекех тата 1943 çулта шапа хуранĕсенчен пулса кайнă чулсене çуртсем тума кăларас ĕçе организацилемелле (çакна ăна çулталăкне 300 пин чулран кая мар кăлармалла туса йĕркелес пулать).

3. РСФСР Строительство материалĕсен Халăх Комиссариатне Куйбышев облаçĕнчи Алексеевскпа Красноглинскри алебастр завочĕсенче кашнинче çулталăкра 100 пин тонна гипс чулĕ хатĕрлемелле туса йĕркелеме хушас.

4. СССР Строительство материалĕсен Халăх Комиссариатне Камское Устьери рудникра çулталăкне 100 пин тонна гипс чулĕ туса кăлармалла тума хушас.

5. СССР Строительство материалĕсен Халăх Комиссариатне 1943 çулта стандартнăй çуртсем туса кăларакан 13 завод туса лартма хушас (кашни завод уйăхра 80-шар хваттер туса кăларма пултартăр); вăл шутран Смоленск облаçĕнче—4 завод, Калинин облаçĕнче—3 завод, Орел облаçĕнче—5 завод, вĕсенчен 2 заводне Курск облаçĕ валли тумалла.

6. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главлесоохранăна Курск облисполкомне 100 пин кубометр йывăç касмалăх вăрман уйăрса пама, Орел облисполкомне—200 пин кубометр йывăç касмалăх вăрман уйăрса пама хушас.

7. Сельхозбанка яллă вырăнсенче харпăрхăй тĕллĕн çурт-йĕрсем тума кашни çемьене 7 çуллăх срока 10-шар пин тенкĕ кивсен укçа пама хушас.

8. Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенче промышленность предприятийĕсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур наркоматсемпе ведомствăсене хăйсем юсакан предприятисем çумĕнчи пурăнмалли çуртсене юсас тĕлĕшпе те пĕр вăхăтрах ĕçлеме хушас.

VIII.

Чугун çул вокзалĕсене, станцийĕсене, чугун çулсем çинчи будкăсене тата ытти çуртйĕрсене юсаса йĕркелемелли мерăсем çинчен

1. Чугун çулсене, вокзалсене тата противникран ирĕке кăларнă чугун çулсем çинчи пурăнмалли тата ытти çуртйĕрсене хăвăртрах юсасси, çĕнĕрен тăвасси çулйĕр Халăх Комиссариачĕн тата вырăнсенчи партипе совет организацисен халех тумалли задачи пулса тăрать тесе шутлас.

2. Çулйĕр Халăх Комиссариатне çапла тума хушас:

а) 1944 çулхи январĕн 1-мĕшчен кăштах кăна çĕмĕрĕлнĕ вокзалсене, çулсем çинчи пурăнмалли тата ытти çуртйĕрсене юсаса майлаштарас ĕçе туса ирттермелле, çавăн пекех тата станцисен вăхăтлăх çурчĕсемпе пурăнмалли çуртсене (çав çуртсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă çĕрте) çĕнĕрен тăвас ĕçе пурнăçа кĕртмелле: пĕтĕмпе станци çурчĕсем—122, пурăнмалли çуртсем—520 пин тăваткăл метр, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем—1.157, çулсем çинчи будкăсем—1.708 çĕнĕрен тумалла; çак цифрăсене чугун çулсем тăрăх çапла валеçес:

Калинин чугун çулĕ тăрăх—Ржев станцинче пассажирсен вăхăтлăх çуртне, 16 станцире пассажирсен çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 20 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем—62, çулсем çинчи будкăсем — 76 туса хатĕрлемелле;

Хĕвеланăç чугун çулĕ тăрăх—Вязьма, Гжатск, Новодугинское станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 25 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 39 тата çулсем çинчи будкăсем 42 туса ĕçе ямалла;

Дзержинский ячĕпе тăракан чугун çул тăрăх—Орел тата Курск станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 30 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 65 тата будкăсем 90 туса ĕçе ямалла;

Мускавпа Донбасс чугун çулĕ тăрăх—Касторная тата Валуйки станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, 7 станцире пассажирсен çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 75 пин тăваткал метр чухлĕ, çул çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 168 тата будкăсем 180 туса ĕçе ямалла;

Çурçĕр Донец чугун çулĕ тăрăх—Купянск тата Ворошиловград станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, станцисенче пурăнмалли çуртсем 25 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 68 тата будкăсем 110 туса ĕçе ямалла;

Кăнтăр-Хĕвелтухăç чугунçулĕ тăрăх—Сталинград, Воронеж, Лихая, Лиски тата Шахтная станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, 15 станцире пассажирсен çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 90 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 130 тата будкăсем 235 туса ĕçе ямалла;

Ворошилов ячĕпе тăракан чугун çул тăрăх—Ростов, Тихорецкая, Кавказская, Краснодар, Армавир тата Ворошиловск станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, 25 станцире пассажирсен çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 90 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 240 тата будкăсем 375 туса ĕçе ямалла;

Орджоникидзе ячĕпе тăракан чугун çул тăрăх—Минеральные Воды, Прохладная, Невинномысская станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, 9 станцире пассажирсен çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 25 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 77 тата будкăсем 125 туса ĕçе ямалла;

Октябрьски чугун çул тăрăх—Бологое, Малая Вишера тата Клин станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 50 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 92 тата будкăсем 95 туса ĕçе ямалла;

Мускавпа Киев чугун çулĕ тăрăх—8 станцире пассажирсен çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 25 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 92 тата будкăсем 120 туса ĕçе ямалла;

Кăнтăр чугун çулĕ тăрăх—Белгород станцийĕнче пассажирсен вăхăтлăх çуртне, Годня, Богодухов, Ржава станцийĕсенче пассажирсен çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 20 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 58 тата будкăсем 70 туса ĕçе ямалла;

Кировски чугун çул тăрăх—Мурманск, Кандалакша тата Кировск станцийĕсенче пассажирсен вăхăтлăх çурчĕсене, пурăнмалли çуртсем 40 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 50 тата будкăсем 60 туса ĕçе ямалла;

Çурçĕр чугун çулĕ тăрăх—пурăнмалли çуртсем 5 пин тăваткал метр чухлĕ, çулсем çинчи казармăсемпе çурма казармăсем 16 тата будкăсем 25 туса ĕçе ямалла;

б) «а» пунктра кăтартнă çулсем çинче строительно-восстановительнăй управленисем организацилессине августăн 25-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле, вĕсене инженерла-техникла работниксем, строительство оборудованийĕсемпе инструментсем тупса памалла;

в) строительство валли ĕç вăйĕ çителĕклĕ парас шутпа строительство Управленин начальникне çак батальонсене ярса памалла: Калинин çулĕ çине—НКПС-ăн чугун çул войскисен 3 батальонне, Хĕвеланăç çулĕ çине—НКПС-ăн чугун çул войскисен 4 батальонне, Дзержинский ячĕпе тăракан чугун çул çине—НКПС-ăн чугун çул войскисен 2 батальоне, Мускавпа Донбасс чугун çулĕ çине—101-мĕш строительствăран 1.000 çын, Кăнтăр-Хĕвелтухăç чугун çулĕ çине — НКПС-ăн чугун çул войскисен 45-мĕш бригадин 2 батальонне, 16-мĕш номерлĕ юсав поездне тата 106-мĕш номерлĕ строительно-монтажнăй поезда, Октябрьски чугун çул çине—НКПС-ăн чугун çул войскисен 2 батальонне тата Мускавпа Киев чугун çулĕ çине—НКПС-ăн чугун çул войскисен 2 батальонне ярса памалла. Батальонсене пĕтĕмĕшпех пухса çитерсе ямалла. Кунсăр пуçне çÿлте кăтартнă ĕçсене тунă çĕрте НКПС-ăн запасри 3 полкне ĕçлеттерсе вăхăтлăха усă курма НКПС-а ирĕк парас;

г) кăçалхи сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вокзалсен территорисене, вокзалсем патĕнчи площадьсене тата поселоксене çурт ванчăкĕсемпе тасамарлăхран тасатас ĕçе туса ирттермелле, çавăн пекех тата çурт ванчăкĕсене пăхса тухса строительствăра усă курма май пуррисене суйласа илмелле;

д) станцисемпе пурăнмалли çуртсене вырăнти материалсемпе анлăн усă курса тумашкăн кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен строительно-восстановительнăй управленисем валли типовăй проектсем туса памалла.

3. Строительство валли ĕç вăйĕ тата вырăнти строительство материалĕсем пухас ĕçре практикăллă пулăшу пама обл(край)исполкомсен çак председателĕсене (облаçри, крайри чугун çул участокĕсенче) Оборонăн Государственный Комитечĕн Уполномоченнăйĕсем пулма уйăрса лартас: Калинин облаçĕ — Старо-торжский юлташа, Смоленск облаçĕ —Мельников юлташа, Ленинград облаçĕ—Соловьев юлташа, Курск облаçĕ—Волчков юлташа, Орел облаçĕ—Ромашин юлташа, Ворошиловград облаçĕ—Шевченко юлташа, Воронеж облаçĕ—Васильев юлташа, Сталинград облаçĕ—Зименков юлташа, Тула облаçĕ—Батамиров юлташа, Краснодар крайĕ—Тюляев юлташа, Ставрополь крайĕ—Щедрин юлташа, Ростов облаçĕ— Кипаренко юлташа, Харьков облаçĕ—Жила юлташа тата Карело-Финн ССР Совнаркомĕн Председательне Прокконен юлташа уйăрса лартас.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Уполномоченнăйĕсене, чугун çулсен начальникĕсемпе тата НКПС-ăн строительно-восстановительнăй Управленисен начальникĕсемпе пĕрле, ĕçсен хисепне кура, область, край тата республика тăрăх, вырăнти халăхран ĕç вăйĕ мĕнчухлĕ мобилизацилеме кирлине вунă кунлă срокра палăртма хушас.

Обл(край)исполкомсен председателĕсене тата Карело-Финн ССР Совнаркомĕн председательне çак постановленин 1-мĕш пунктĕнче кăтартнă ĕçсем пĕтиччен ĕçлеме кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ мобилизацилеме ирĕк парас.

4. СССР Строймериалсен Наркоматне тата СССР Наркомлесне сентябрь—декабрь уйăхĕсенче Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ валли кашни уйăхрах пĕр таншар ушкăнсемпе йывăçран тунă тăвата хваттерлĕ стандартлă çуртсем туса пама хушас, вăл шутран Строймериалсен Наркомачĕн 100 тата Наркомлесăн 60 çурт туса памалла.

5. Наркомвнешторга ют çĕршывсенчен илсе килнĕ лашасенчен кăçалхи сентябрь—октябрь уйăхĕсенче НКПС валли 3.000 лаша уйăрса пама хушас. НКПС-а çак лашасене турттарас ĕçе пурнăçа кĕртме хушас.

6. Çулйĕр Халăх Комиссариатне юсав ĕçĕсем пулмалли районсенче вăрман касса хатĕрлĕс ĕçе сарса яма хушас.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главлесоохранăна çав районсенче Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ валли вăрман участокĕсем уйăрса пама хушас, вăл участоксем çывăхра тата паха йывăçлă пулмалла.

7. Наркомчермета юсав ĕçĕсене туса ирттерме, малтан палăртнă фондсем çумне хушса, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ валли 400 тонна пăта ятарласа пама хушас, вăл пăтана 1943 çулхи декабрĕн 1-мĕшчен пĕр таншар пайсемпе парса тăмалла.

8. СССР Строймериалсен Наркоматне çапла тума хушас:

а) 1943 çулхи декабрĕн 1-мĕшчен 150 пин тăваткал метр чухлĕ тĕрлĕ йывăç хатĕрсем (чÿрече таврашсем, алăксем т. ыт. те) туса хатĕрлемелле, вĕсене сентябрь уйăхĕнчен пуçласа кашни уйăхрах пĕр таншар хисеппе НКПС материалĕсенчен туса хатĕрлемелле.

б) Шуровски цемент завочĕн пĕр линийĕн пĕтĕм продукцине сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи декабрĕн 31-мĕшчен НКПС-а парса тăмалла. НКПС-а хăйĕн фончĕсенчен çав завод валли кашни уйăхрах 5 пин тонна кăмрăк парса тăма хушас;

в) Курловски кантăк завочĕн пĕтĕм продукцине, сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çул вĕçлениччен, НКПС-а парса тăмалла.

НКПС-а хăйĕн фончĕсенчен Курловски завод валли кашни уйăхрах 12 пин кубла метр вутă парса тăма хушас.

9. СССР Госпланне 1943 çулхи IV-мĕш кварталта НКПС валли 200 пин тăваткал метр шифер уйăрса пама хушас.

10. Облисполкомсене çапла тума хушас:

а) Рязань облаçĕнче Шуровски цемент завочĕ валли сентябрĕн 1-мĕшчен 300 çын мобилизацилемелле;

б) Пенза облаçĕнче Строймериалсен Наркомачĕ валли сентябрĕн 1-мĕшчен 150 çын мобилизацилемелле;

в) Иваново облаçĕнче Курловски кантăк завочĕ валли сентябрĕн 1-мĕшчен 300 çын мобилизацилемелле.

11. Çапла тума хушас:

а) СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главснаблесăн сентябрь уйăхĕнче НКПС валли Плесецки тата Усть-Шоношски комбинатсенчен, палăртнă фондран ирттерсе, 25 пин кубламетр йывăç тиесе ямалла.

НКПС-ăн çав йывăçа тиеме ĕç вăйĕ парса пулăшмалла;

б) СССР Наркомлесĕн çирĕплетнĕ планран ирттерсе Краснодарлес урлă НКПС валли 5 пин кубламетр йывăç памалла;

в) СССР Госпланĕпе СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главснаблесăн 1943 çулхи IV-мĕш квартал планĕнче çÿлте асăннă ĕçсем валли ятарласа 85 пин кубла метр йывăç тата 5 пин кубла метр пиломатериал уйăрса парассине палăртмалла.

12. СССР Наркомторгне тата юсав ĕçĕсем валли халăха мобилизацилекен крайсемпе облаçсен исполкомĕсен председателĕсене вырăнти халăхран мобилизациленĕ рабочисене фронт çывăхĕнчи чугун çулсем çинчи рабочисен норми чухлĕ снабжени пама хушас.

13. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главснаблеса НКПС валли уйăрнă йывăçа Лужски тата Усть-Шоношски вăрман базисем урлă НКПС ыйтнă чухлĕ пĕтĕмпех тата пĕр чарăнусăр куçарса тăрассине пурнăça кĕртме хушас.

14. Юсав ĕçĕсем валли кирлĕ материалсене, çирĕплетнĕ плана пăхмасăр, кирлĕ чухлĕ турттарма тата çав ĕçсене валли НКПС-ăн чрезвычайнăй расхочĕсен смети тăрăх укçа уйăрса пама Çулйĕр Халăх Комиссариатне ирĕк парас.

IX.

Чугун çул çинчи линейнăй работниксене кил вырăн участокĕсем уйăрса парасси тата обязательнăй йĕркепе ялхуçалăх продукчĕсем парассинчен хăтарасси çинчен

1. Çакăн пек йĕрке тăвас: чугун çул рабочийĕсемпе служащийĕсем, вĕсем фронт çывăхĕнчи е нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă чугун çулсем çинче ĕçлеççĕ пулсан тата яллă вырăнсенче колхозсен территорийĕнче пурăнаççĕ пулсан, вĕсем кил вырăнĕсемпе усă кураççĕ, анчах кил вырăнĕ, çуртйĕрсем йышăнакан çĕр лаптăкне те кĕртсе, пĕр çемье валли 0,15 гектартан ытла пулмалла мар.

2. Облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикăсен совнаркомĕсене çапла тума ирĕк парас: чугун çул çинчи поездсене çÿретессипе çыхăнса тăракан линейнăй работниксене—паровоз деповĕсемпе паровоз отделенийĕсен, вагон участокĕсен, вагон деповĕсемпе вагон юсакан пунктсен, çулйĕр дистанцисен, околотоксен тата рабочи отделенисен, движени отделенисен, станцисен тата кондукторсен бригадисен, çыхăну дистанцисен тата тиев службин работникĕсене—çĕрлаптăкĕсем уйăрса памалла, вăл лаптăксене чугун çул таврашĕнчи тата Госфондăн пушă выртакан çĕрĕсенчен—сухаласа акма 0,5 гектара çити тата утă çулма пĕр гектара çити хисеппе уйăрса памалла.

Чугун çул таврашенчи участоксенчи çĕре чи малтан чугунçул работникĕсене уйăрса памалла тăвас.

3. Чугун çул транспортĕнчи рабочисемпе служащисене вĕсене уйăрса панă çĕр участокĕсем çине, хăйсем кăмăллана тăрăх, кирек мĕнле ялхуçалăх культури те акма ирĕк парас.

4. Чугун çул транспортĕнчи рабочисемпе служащисене, вĕсем çĕр участокĕсемпе çак постановленире палăртнă норма тăрăх усă кураççĕ пулсан, государствăна обязательнăй йĕркепе ялхуçалăх продукчĕсем, çавăн пекех тата хăйсен килĕнчи выльăх-чĕрлĕх шучĕпе аш-какай, сĕт-çу парассинчен тата 1943, 1944 çулсенче ялхуçалăх налогĕсем тÿлессинчен хăтарас.

5. СССР Наркомземне, облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикăсен совнаркомĕсене чугун çул транспортĕнчи рабочисемпе служащисене пахча-çимĕç культурисен вăрлăхĕсем, сысна çурисемпе чăх-чĕпсем туянас ĕçре пулăшма хушас.

СССР Наркомземне тата НКПС-а чугун çул работникĕсем валли пахча-çимĕç культурисен вăрлăхĕсем, сысна çурисем тата чăх-чĕпсем уйăрса памалли хисепе пĕрле палăртма хушас.

6. Фронт çывăхĕнчи чугун çул работникĕсене 10 пин тенке çити ссуда пама Цекомбанка хушас, çав ссудăна харпăрхăйĕ валли пурăнмалли çуртсем лартма 7 çуллăха кĕтевле памалла, вăл ссудăн пĕтĕм хисепĕ 1943 çулта 10 миллион тенке çити пулмалла.

НКПС-а, край(обл)исполкомсене харпăрхăйĕ валли пурăнмалли çуртсем тума вырăнти строймериалсем парса чугун çул работникĕсене пулăшма хушас.

7. Карело-Финн ССР-ĕнчи КП(б) Центральный Комитетне, ВКП(б) Ставрополь тата Краснодар крайкомĕсене, ВКП(б) Калинин, Орел, Смоленск, Тула, Сталинград, Мускав, Воронеж, Курск, Ростов, Ворошиловград, Харьков тата Ленинград обкомĕсене НКПС-ăн строительно-восстановительнăй управленийĕсене çак постановленире кăтартнă ĕçсене туса ирттернĕ çĕрте пулăшса пыма хушас.

X.

Хĕрлĕ Çар воинĕсен тата Отечественнăй вăрçă партизанĕсен ачисем валли, çавăн пекех тата ашшĕ-амăшĕсене нимĕç оккупанчĕсем вĕлернипе тăлăха тăрса юлнă ачасем валли суворовла çар училищисем, специальнăй ремесла училищисем, специальнăй ача çурчĕсем тата ача приемник-распределителĕсем организацилесси çинчен

1. Хĕрлĕ Çар воинĕсен, Отечественнăй вăрçă партизанĕсен, çавăн пекех тата нимĕç оккупанчĕсем вĕлернĕ совет тата парти работникĕсен, рабочисемпе колхозниксен ачисене вырнаçтарма, пăхса ÿстерме тата вĕрентме Краснодарпа Ставрополь крайĕсенче, Ростов, Сталинград, Ворошиловград, Воронеж, Харьков, Курск, Орел, Смоленск тата Калинин облаçĕсенче çакăн пек учрежденисем организацилес:

а) 9 суворовла çар училищи, ĕлĕкхи кадет корпусĕсем евĕрлĕскерсем; кашни училищĕре 500 çын пулмалла, пĕтĕмпе 4.500 çын пулмалла; вăл училищĕсенче 7 çул вĕ-

(Юлашки 4-мĕш страницăра).

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсас тĕлĕшпе халех тумалли ĕçсем çинчен

Ю л а ш к и

ренмелле, воспитанниксем валли хупă общежитипе столовăй пулмалла;

б) 23 специальнăй ремесла училищи; кашни училищĕре 400 çын пулмалла, пĕтĕмпе 9.200 çын пулмалла; вĕсенче 4 çул вĕренмелле, çав училищĕсенчен 12-шĕ арçын ачасем валли, 11-шĕ хĕрачасем валли пулмалла;

в) 16.300 воспитаннике вырнаçтармалăх специальнăй ача çурчĕсем тата 1250 пĕчĕк ача валли ача çурчĕсем;

г) 2.000 çын вырнаçтармалăх 29 ача приемник-распределителĕ.

Çакăнта кăтартнă учрежденисене пурне те пĕтĕмпех государство шучĕпе, Оборона Халăх Комиссариачĕн, Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕн, РСФСР-пе УССР Наркомпросĕсен, СССР НКВД-пе Наркомздравĕн сметисем тăрăх тытса тăмалла.

Суворовла çар училищисем çинчен

2. Оборона Халăх Комиссариатне çак ĕçсене тума хушас:

а) 1943 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 1-мĕшĕччен çакăн пек училищĕсем уçмалла:

Майкоп хулинче—Краснодарти суворовла çар училищи,

Новочеркасск хулинче—Новочеркасскри суворовла çар училищи,

Астрахань хулинче—Сталинградри суворовла çар училищи,

Воронеж хулинче—Воронежри суворовла çар училищи,

Чугуев хулинче—Харьковри суворовла çар училищи,

Курск хулинче—Курскри суворовла çар училищи,

Ставрополь хулинче—Ставропольри суворовла çар училищи.

б) кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕччен суворовла çар училищисен штачĕсемпе положенийĕсене тата вĕрену программисемпе планĕсене çырса хатĕрлесе пичетлесе кăлармалла, çав училищĕсене ертсе пыракан кадрсем тата ялан ĕçлекен офицерсем, педагогсем тата пулăшса тăракансем çителĕклĕ тупса памалла.

3. Çакăн пек йышăнас: суворовла çар училищин задачи—арçын ачасене çар службинче офицер званийĕнче тăма хатĕрлесси тата вĕсене вăтам шкул паракан пĕлӳсем чухлĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳсем парасси пулса тăрать.

Суворовла çар училищисене 10 çула çитнĕ воспитанниксене илмелле, вĕсенче 7 çул вĕренмелле.

Суворовла çар училищисем çумĕнче кĕçĕн тата аслă приготовительнăй классем организацилес, кашни класра пĕр çул вĕренмелле тăвас. Приготовительнăй классене 8 çултан пуçласа 10 çула çитнĕ ачасене илмелле.

Суворовла çар училищисен тата вĕсем çумĕнчи приготовительнăй классен воспитанникĕсем çав училищĕсенче пĕтĕмпех государство шучĕпе пурăнаççĕ.

4. 1943 çулта суворовла çар училищисене пурне те пĕр вăхăтрах ачасем кирлĕ таран илсе çитерес тесе, правилăран тухса çакăн пек ачасене илме ирĕк парас: вĕсене 10 çултан пуçласа 13 çула çитнĕ ачасене илмелле.

5. Оборона Халăх Комиссариатне çак ĕçсене тума хушас:

а) суворовла çар училищисем уçмалли пунктсенче кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнче училищисем валли çуртсем уйăрса хурса юсаса çитермелле;

б) суворовла çар училищисен воспитанникĕсем мĕнле форма тăхăнса çÿремелле пăхса тухса, çак формăсене çирĕплетме сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне СССР Совнаркомне тăратмалла.

6. Суворовла çар училищисене ĕçре ертсе пымашкăн Хĕрлĕ Çарăн Учебнăй заведенисен Управленийĕнче суворовла çар училищисен отделĕ тума ирĕк парас.

Специальнăй ремесла училищисем çинчен

7. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине 1943 çулхи сентябрьпе ноябрь уйăхĕсенче çакăн пек специальнăй ремесла училищисем уçма хушас:

Краснодар крайĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри металлистсен училищи, арçын ачасем валли; тепри — сыхăну училищи, хĕрачасем валли;

Ставрополь крайĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — металлистсен училищи, арçын ачасем валли; тепри — сыхăну училищи, хĕрачасем валли;

Ростов облаçĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — металлистсен училищи, арçын ачасем валли; тепри — сыхăну училищи, хĕрачасем валли;

Сталинград облаçĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — металлистсен училищи, арçын ачасем валли; тепри — энергетиксен училищи, хĕрачасем валли;

Ворошиловград облаçĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсем — металлистсен училищисем; пĕри — арçын ачасем валли, тепри — хĕрачасем валли;

Воронеж облаçĕнче—2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — металлистсен училищи, арçын ачасем валли; тепри — сыхăну училищи, хĕрачасем валли;

Харьков облаçĕнче — 3 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — металлистсен училищи, арçын ачасем валли; тепри — энергетиксен училищи, арçын ачасем валли; виççĕмĕшĕ — радио ĕçĕн училищи, хĕрачасем валли;

Орел облаçĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — столяр ĕçĕн училищи, арçын ачасем валли; тепри — çĕвĕçсен училищи, хĕрачасем валли;

Курск облаçĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — металлистсен училищи, арçын ачасем валли; тепри—сыхăну училищи, хĕрачасем валли;

Смоленск облаçĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — столяр ĕçĕн училищи, арçын ачасем валли; тепри — çĕвĕçсен училищи, хĕрачасем валли;

Калинин облаçĕнче — 2 ремесла училищи; вĕсенчен пĕри — столяр ĕçĕн училищи, арçын ачасем валли; тепри — çĕвĕçсен училищи, хĕрачасем валли.

8. Çапла тăвас: специальнăй ремесла училищисене 12 çултан пуçласа 13 çула çитнĕ ачасене илмелле, вĕсенче 4 çул вĕренмелле.

Специальнăй ремесла училищисенче вĕренекенсем производство тĕлĕшпе квалификаци илнисĕр пуçне тата вăтам шкулăн 7 класĕ паракан пĕлӳсенчен кая мар пĕлӳсем илмелле.

9. ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсене тата облисполкомсемпе крайисполкомсен председателĕсене сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр Ĕç резервĕсен Главнăй управленине специальнăй ремесла училищисен общежитийĕсем, вĕрену класĕсем тата вĕрену мастерскойĕсем валли чи юрăхлă çуртсем уйăрса пама тата вĕсене юсаса çав училищĕсем валли юрăхлă тумашкăн строиматериал уйăрса пама хушас.

Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине çав çуртсене юсаса ремесла училищисем валли юрăхлă тумашкăн тивĕçлĕ облаçсемпе крайсенчи ремесла училищисемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсенчен специальнăй отрядсем организацилеме хушас.

10. Специальнăй ремесла училищисенче вĕренекенсене кунне виçĕ хут апат çитермелле тăвас.

Специальнăй ремесла училищисенче вĕренекенсене талăкра çитермелли продуктсен нормисене çирĕплетес.

Специальнăй ремесла училищисенче вĕренекенсене кунне виçĕ хут апат-çитермешкĕн СССР Наркомторгĕн Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине продовольстви фончĕсем пĕр чарăнмасăр уйăрса тăмалла.

11. Специальнăй ремесла училищисенче вĕренекенсене, çавăн пе[illegible] тăвас.

12. СССР Наркомтекстильне тата СССР Наркомлегпромне Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине шутпа тăрăх ана хăйĕн фончĕсенчен октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тумтир тата ата-пушмак кирлĕ таран памалла.

13. РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Промысла кооперацин Управленине икĕ уйăх хушшинче Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине специальнăй ремесла училищисем валли общежитийĕсене тата вĕрену класĕсене кирлĕ инвентарь (кровать, сĕтел, пукан, тумбочкăсем т. ыт. те) туса памалла.

14. Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине специальнăй ремесла училищисенче воспитатель должноçне тума ирĕк парас, ана 50 вĕренекен пуçне пĕр воспитатель шучĕпе пулмалла.

15. Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине хăйĕн халхи штачĕсенче ирттерсе специальнăй ремесла училищисен отделĕ тума ирĕк парас.

Специальнăй ача çурчĕсем çинчен

16. РСФСР-пе УССР Наркомпросĕсене сентябрьпе ноябрь уйăхĕсем хушшинче 16.300 ача вырнаçтармалăх специальнăй ача çурчĕсем организацилеме хушас, çав шутран:

РСФСР-те	—13.100	ачалăх
Краснодар крайĕнче	—1500	„
Ростов облаçĕнче	—1500	„
Ставрополь крайĕнче	—1300	„
Сталинград облаçĕнче	—1500	„
Курск облаçĕнче	— 800	„
Орел облаçĕнче	—1500	„
Смоленск облаçĕнче	— 800	„
Калинин облаçĕнче	—1200	„
Воронеж облаçĕнче	—3000	„
УССР-те	—3200	„
вĕсенчен:		
Ворошиловград облаçĕнче	—1200	ачалăх
Харков облаçĕнче	—2000	„

Специальнăй ача çурчĕсене 3 çултан пуçласа 13 çула çитнĕ ачасене (арçын ачасемпе хĕрачасене) йышăнмалла.

СССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатне специальнăй ача çурчĕсене организацилес ĕç мĕнле пынине тата вĕсем мĕнле ĕçленине куллен тĕрĕслесе тăма хушас. СССР НКВД-не облаçсене СССР НКВД-н уполномоченнăйĕсене яма хушас, çав уполномоченнăйсен обязанноçĕ—специальнăй ача çурчĕсене кăтартнă вăхăтра организацилеме пулăшасси, вĕсен ĕçне контрольлесе тăрасси тата специальнăй ача çурчĕсене куллен пулăшса тăрас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнасси пулса тăрать.

17. ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсене тата облисполкомсемпе крайисполкомсен председателĕсене специальнăй ача çурчĕсем валли çуртсем тупса пама, вĕсене юсаса ача çурчĕсем валли юрăхлă тума хушас, ача çурчĕсене хуçалăх оборудованийĕпе инвентарĕсем (кроватьсем, сĕтелсем, пукансем, кухня инвентарĕ, столовăй инвентарĕ г. ыт. те) тупса пама хушас.

18. СССР Наркомторгне специальнăй ача çурчĕсенчи ачасем валли продуктсем ыттисенчен малтан тата пĕр чарăнмасăр парса тăма хушас.

19. СССР Наркомтекстильне тата СССР Наркомлегпромне РСФСР-пе УССР Наркомпросĕсене специальнăй ача çурчĕсем валли пир-авăр тата промышленность таварĕсем уйăрса пама хушас; çав шутран 25 процентне—сентябрь уйăхĕнче, рынок фончĕ шутĕнчен памалла, 75 процентне—октябрь уйăхĕнче, РСФСР-пе УССР Наркомпросĕсен фончĕсенчен памалла.

СССР Госпланĕн хăйĕн 4-мĕш кварталти планĕнче РСФСР-пе УССР Наркомпросĕсене пир-авăр тата промышленность таварĕсем хушса памаллине палăртса хумалла.

20. РСФСР Наркомместпромне специальнăй ача çурчĕсем валли РСФСР Наркомпросне хуçалăх оборудованийĕпе инвентарь хатĕрлесе пама хушас.

21. СССР Наркомздравне çак ĕçсене тума хушас:

а) кăçалхи сентябрьпе ноябрь уйăхĕсем хушшинче пĕчĕк ачасен специальнăй çурчĕсене 1750 ача вырнаçтармалăх организацилеме хушас, вĕсем крайсемпе облаçсенче çакăн чухлĕ ача вырнаçмалăх пулмалла:

Краснодар крайĕнче	— 100	ача	валли
Ставрополь крайĕнче	—50	„	„
Ростов облаçĕнче	— 100	„	„
Воронеж облаçĕнче	—250	„	„
Курск облаçĕнче	—300	„	„
Орел облаçĕнче	—200	„	„
Смоленск облаçĕнче	—200	„	„
Сталинград облаçĕнче	—150	„	„
Калинин облаçĕнче	—100	„	„
Ворошиловград облаçĕнче	—100	„	„
Харьков облаçĕнче	—200	„	„

б) специальнăй ремесла училищисемпе специальнăй ача çурчĕсен воспитанникĕсене медицина енчен пулăшса, пăхса тăрас ĕçе организацилемелле, ремесла училищисемпе ача çурчĕсене медицина персоналĕ тата медикаментсем çителĕклĕ памалла;

в) специальнăй ача çурчĕсемпе ремесла училищисене илме тивĕçлĕ чирлĕ ачасене хальхи сыватмалли учрежденисене обязательнăй йĕркепе госпитальри пек вырттармалла, вĕсене сывалсан тин çав çуртсене ямалла;

г) СССР Наркомторгне çамрăк ача çурчĕсенчи ачасене çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх тăрантарма хушас;

д) край тата область исполкомĕсен председателĕсене пĕчĕк ача çурчĕсене вырнаçтарма СССР Наркомздравне 1943 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне юрăхлă çуртсем уйăрса пама хушас.

Ача приемникĕсем çинчен

22. СССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатне 2.000 ача вырнаçмалăх 29 приемник-распределитель уçма хушас, вĕсене çак крайсемпе облаçсенче уçмалла: Краснодар тата Ставрополь крайĕсенче, Сталинград, Ворошиловград тата Смоленск облаçĕсенче—кашнинче 3-шер ача приемникĕ, 200 ача вырнаçмалăх, Ростов, Курск, Воронеж, Орел тата Калинин облаçĕсенче—кашнинче 2-шер ача приемникĕ, 150 ача вырнаçмалăх, Харьков облаçĕнче—4 ача приемникĕ, 250 ача вырнаçмалăх.

23. Ĕççынни депутачĕсен край тата область исполкомĕсен çав ача приемникĕсем валли çуртсем, инвентарь тата транспорт уйăрса памалла.

24. 22-мĕш пунктра кăтартнă крайсемпе облаçсенче ача приемникĕсене кирлĕ япаласене НКВД урлă централизациленĕ йĕркепе парса тăмалла тăвас, вĕсене НКВД-ăн ĕçлеттерсе тӳрлетекен колонийĕсенчи нормăсем тăрăх памалла.

25. Суворовла çар училищисене, специальнăй ремесла училищисене, специальнăй ача çурчĕсене тата пĕчĕк ача çурчĕсене ачасене ямашкăн облаçсемпе крайсенче комиссисем тумалла, вĕсенче ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ председатель пулмалла, комисси членĕсем çаксем пулмалла: облаçри, крайри çар комиссарĕ, ВЛКСМ крайкомĕн (обкомĕн) секретарĕ, ĕç резервĕсен облаçри (крайри) управленийĕн начальникĕ, облаçри (крайри) сутĕç пайĕн заведующийĕ, облаçри (крайри) сывлăх пайĕн заведующийĕ тата НКВД представителĕ.

26. Оборона Халăх Комиссариатне, Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине тата РСФСР-па УССР Наркомпросĕсене специальнăй ремесла училищисемпе специальнăй ача çурчĕсем çумĕнче подсобнăй ялхуçалăхĕ организацилеме хушас. Çав хуçалăхсенче, çулла лагерьти пек каннипе пĕрлех, ачасене ялхуçалăхĕнчи ĕçсене хăнăхтарса пымалла. Край (область) исполкомĕсене çавăн пек хуçалăхсем тума кирлĕ таран çĕр участокĕсем уйăрса пама хушас.

27. 1943 çулхи сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине, РСФСР-па УССР Наркомпросĕсене, СССР Наркомздравĕпе НКВД-на специальнăй ремесла училищисен, специальнăй ача çурчĕсен, пĕчĕк ача çурчĕсен тата ача приемникĕсен çурчĕсене юсама тата юрăхлă тума строиматериалсем уйăрса пама СССР Госпланне хушас, вĕсене Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕ, РСФСР-па УССР Наркомпросĕсем, СССР Наркомздравĕ тата НКВД ыйтнă чухлĕ памалла.

28. Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине, РСФСР Наркомпросне тата СССР Наркомздравне специальнăй ремесла училищисен, специальнăй ача çурчĕсен тата пĕчĕк ача çурчĕсен 1943 çулхи штачĕсене çирĕплетме хушас.

29. СССР Наркомфинĕн суворовла çар училищисем, специальнăй ремесла училищисем, специальнăй ача çурчĕсем, пĕчĕк ача çурчĕсем тата ача приемникĕсем туса вĕсене тытса усрамашкăн 1943 çулта кирлĕ укçана Оборона Халăх Комиссариатне, Ĕç резервĕсен Главнăй Управленине, РСФСР-па УССР Наркомпросĕсене, СССР Наркомздравне тата НКВД-на уйăрса пама палăртса хумалла

* * *

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха çĕнĕрен йĕркелесе ярас тĕлĕшпе ĕçлекен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитета (комитет председателĕ Г. М. Маленков юлташ, членĕсем: Л. П. Берия, А. И. Микоян, Н. А. Вознесенский тата А. А. Андреев юлташсем) нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенче хуçалăха çĕнĕрен йĕркелесе ярас ĕçе ертсе пыма тата правительствăн çав районсем тĕлĕшпе йышăннă решенийĕсене пурнăça кĕртнине контрольлесе тăма хушас.

Ирĕке кăларнă районсене пулăшма

ЕЛЧĔК, августăн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 11 колхоз нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозçене пулăшас тĕлĕшпе хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 3 пăру, 6 сысна, 6 сурăх, «Смычка» колхоз 3 сурăх, 3 сысна, 2 пăру, Крупская ячĕпе тăракан колхоз 6 сысна, 1 лаша панă. Пĕтĕмпе 11 колхоз 33 сурăх, 21 сысна, 9 пăру, 1 лаша панă. Ытти колхозсем те обязательствăсене çак кунсенчех тултараççĕ.

Пирĕн авиаци Дебальцево чугун çул узелне, Барвенково тата Чистяково станцийĕсене, Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пухăнса тăнă нимĕç çарĕсене тата тăшманăн аэродромĕсене тапăнни

Августăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Дебальцево чугун çул узелне тата Барвенковăпа Чистяково станцийĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахса боеприпассен склачĕсене сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн темиçе çар эшелонне çĕмĕрнĕ. Çав çĕрех пирĕн авиаци Харьков хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пухăнса тăнă нимĕç çарĕсене тата танксемпе автомашинăсене пыра-пыра çапнă.

Тăшманăн йышлă самолетсем ларнă аэродромĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Бомбăсем самолетсем ларнă вырăнсенче çурăла-çурăла кайнă.

Пирĕн икĕ самолет хăйсен базисене таврăнман.

Ют çĕршывсенче

Рузвельтпа Черчилль пĕрле тунă деклараци

КВЕБЕКРИ КОНФЕРЕНЦИ ХУПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Черчилльпе Рузвельтăн паян Квебекра официальнăй йĕркепе тунă декларацийĕн пĕтĕм текстне радио тăрăх панă. Вăл текст çакăн пек:

«Англипе Америкăн çар канашлăвĕ, Канада правительстви тараватлă пулса йышăннипе Квебекра августăн 11-мĕшĕнче уçăлнăскер, халь хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ. Пĕтĕм тĕнчери вăрçă ĕçĕсене пăхса тухнă, вĕсене президентпа премьер-министр Вашингтонра май уйăхĕн вĕçĕнче пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçнă хыççăнхи йышлă событисем, союзниксемшĕн усăллă событисем енчен пăхса тухнă. Икĕ çĕршывăн флочĕсем, çарĕсем тата сывлăш-çар вăйĕсем прогрессивнă ĕçлеме пултарччăр тесе, кирлĕ решенисем йышăннă. Çав вăйсем вĕсем çĕр чăмăрĕн тĕрлĕ пайĕсенче тăшмана хирĕç тăтăшах туса пыракан ĕçсенче пĕр-пĕринпе хутшăнса кайнă. Çавна шута илсе, вăрçа ертсе пыракансен чи çӳлти пайĕнче тĕллев те, майсем те пĕтĕмпех пĕрлĕхлĕ пулни кирлĕ. США-н тата Британия пĕрлештерсе тăракан нацисемпе Британи империйĕн вăрçă ĕçĕсем аслăланса, тарăнланса пынă май тата урăх канашлусем те кирлĕ пулĕç, вĕсене, тен хальхинчен час-часрах пухмалла пулĕ. Йышăннă решенисем пирки мĕнле те пулин деклараци туни çапăсакан войскăсене нимĕнле пулăшу та паман пулĕччĕ. Çав решенисем вĕсем ĕçре çеç палăрма пултараççĕ. Анчах та çапла калама пулать: штабсен руководителĕсен çар канашлăвĕсенче Японие хирĕç пыракан вăрçă çинчен тата Китая ĕçлĕн пулăшасси çинчен нумай калаçнă. Чан Кай-ши генералиссимусăн представителĕ Т. В. Сун (Сун Цзы-вень) çав калаçусене хутшăннă. Европа тĕлĕшпе йышăннă пекех, çак тĕлĕшпе те президентпа премьер-министр пĕрлешӳллĕ штабсен начальникĕсем пĕрлешӳхăшлăн пулса сĕннисене ырласа йышăнма пултарчĕç. Хальхи вăхăтра мала тухса тăракан ыйтусем тĕлĕшпе те, вăрçă ĕçĕсемпе сыхăнăскерсем е çав ĕçсенчен тухса тăраканскерсем тĕлĕшпе, калаçса татăлнă. Кăçалхи çул пĕтиччен Англипе Америка влаçĕсем хушшинче тата тепĕр канашлу туса ирттерме йышăннă, çакă вăл Совет Российипе пĕрле виçĕ çĕршыв тĕл пулса калаçассинчен пуçне туса ирттермелли пулать. Совет Правительствине решенисен Германипе Италие хирĕç пыракан вăрçă çинчен калакан пайĕ пирки тĕплĕ докладсем ярĕç. Канашлу вăхăтĕнче француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетпа мĕнле çыхăнса тăмалли çинчен те калаçнă. Çак эрне вĕçĕнче темиçе правительство декларацисем тăвĕç, тесе шутлаççĕ».

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: иртнĕ каç бомбардировочнăй авиаци самолечĕсем Рейн облаçĕнчи объектсене, вăл шутра Кельн хулинчен çурçĕртерехри Леверкузенри хими завочĕсене, атакăланă. Истребительнăй авиаци самолечĕсем тăшманăн Францири тата Бельгири чугун çул объекчĕсемпе аэродромĕсене атакăланă.

Августăн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен самолечĕсем Кортинири (Кăнтăр Италия) сортировочнăй станци çине бомбăсем пăрахнă.

Леверкузенра «И. Г. Фарбениндустри» концернĕн пысăк хими завочĕсем, хурçă шăратакан заводсем, механически мастерскойсем, сирпĕнтерекен япаласем тăвакан заводсем, пир тĕртекен фабрикăсем вырнаçса ларнă.

РУМЫНИПЕ ВЕНГРИ ХУШШИНЧИ ХИРĔÇӲСЕМ ÇИВĔЧЛЕННИ

СТАМБУЛ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Трансильвани пирки Румынипе Венгри хушшинче тавлашу çĕнĕрен вăйланса кайнă. «Пестер Ллойд» хаçат нумаях пулмасть Венгрин пропаганда министрĕн Анталан сăмахне пичетленĕ, çав сăмах вăл Антонескун Венгрие хирĕç калаһа сăмахне ответлени пулса тăрать.

Антонеску хăйĕн сăмахĕнче Румынин Çурçĕр Трансильвание илмелли «право пуррине» вăйлăн палăртнă (Çурçĕр Трансильвания вăл Германи ирĕкĕпе Венгри аллине кусна). Антонеску Венгрие çапла каласа айăпланă: Çурçĕр Трансильвание оккупациленипе Венгрия Румыние «çурăмран çĕçĕпе чикрĕ», Румынирен «нихăçан та Венгрин пулман çĕрсене» туртса илчĕ, тенĕ.

Антал, Антонескун çав сăмахĕ çинчен каласа, ăна историе пăсса кăтартать тесе айăпланă. Вăл çапла каланă: румынсем Трансильвания кирек хăçанах та вĕсен пулнине кăтартма тăрăшса тĕпчесе пăхнисем «ăссăрскерсем, истори енчен тĕрĕс марскерсем» пулса тăраççĕ, тенĕ. «Трансильвания вăл,—тенĕ Антал,—пирĕн территори пулса тăрать, çавăнпа та эпир ăна мĕнпур вăйсемпе тата тĕрлĕ майсемпе хӳтĕлеме хатĕр», тенĕ. Румыния вăл хăй Венгрие «çурăмран çĕçĕпе чикрĕ», тенĕ Антал. Юлашкинчен вăл çапла хăратса каланă: венгерецсем Трансильванишĕн жертвăсем тӳсме яланах хатĕр, тенĕ.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕ Берлина атакăланă. Берлина уяр çанталăк чухне тапăннă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, бомбăсем пăрахма шутланă вырăнсене питĕ нумай бомба пăрахнă. Берлин патне вĕçсе пынă чухне тата Берлин çинче тăшманăн нумай истребителĕсене пĕтерсе тăкнă.

Берлина тапăннине истребительнăй авиаци пулăшса пынă, вăл, Германи самолечĕсене Англи бомбардировщикĕсем патне пыма парас мар шутпа, Германири тата вăл оккупациленĕ территорисенчи аэродромсене тапăннă.

Хăйсен базисене 58 бомбардировщик тата пĕр истребитель таврăнман.

Çакна палăртаççĕ: çак юлашки хутĕнче Берлина халиччен пырса тапăннисенчен кирек хăшинчен те икĕ хут вăйлăрах тапăннă.

СОЮЗНИКСĔН АВИАЦИЙĔ ИТАЛИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Америка авиацийĕ ĕнер Барири (Кăнтăр-хĕвелтухăç Италия) аэродром çине тата сортировка станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă. Нумай бомбăсем тӳрĕ лекнине асăрханă.

Августăн 22-мĕшĕнче тата 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен самолечĕсем Салернори (Кăнтăр Италия) чугун çулсене атакăланă. Сывлăшри çапăçура 28 самолет персе ӳкернĕ.

Англи самолечĕсем Родос утравĕ çинчи Ливдо хулинчи казармăсем çине бомбăсем пăрахнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 23-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сеслă илемлĕ

ПРИНЦ И НИЩИЙ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ЗАПОЗДАЛЫЙ ЖЕНИХ

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1108 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.